Инв. № 2949
2949
3039
41-262
Кг. № 349.

УХСАЙ ЯККĂВĔ

# ХУРА ЭЛЧЕЛ

ПИЛĔК АКТЛĂ ТРАГЕДИ

ЧĂВАШГОСИЗДАТ
1941

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЕ
экземпляры в количестве ______
экземпляров
ПОЛУЧЕНЫ
„28“ апреля 1941 г.
Подпись А. Степанович.

Обязательный
контрольный
экземпляр

УХСАЙ ЯККĂВĔ

# ХУРА ЭЛЧЕЛ

## ПИЛĔК АКТЛĂ ТРАГЕДИ

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
ШУПАШКАР ◆ 1941

*Ухсай Маруçне*

# Хура элчел

Çапла иртрĕ пурăнăç.
*К. Иванов.*

ВЫЛЯКАНСЕМ:

1. Константин Васильевич Иванов, поэт.
2. Федор Павлович Павлов, композитор.
3. Иван Яковлевич Яковлев, Чĕмпĕрти Чăваш шкулĕн директорĕ.
4. Микки, шкул хуралçи.
5. Варфоломей Фомич Вознесенский, пуп.
6. Николай Ильич Икасов, офицер.
7. Иван Петрович Шутров, сават хуçи.
8. Руфина, Вознесенскийĕн хĕрĕ.
9. Анюк, ял хĕрĕ.
10. Пулăçă.
11. Мăнкĕрў.
12. Шăпăрçă.
13. Кĕрў.
14. Туй халăхĕ.
15. Ачасем.

1913–14 çулсенче пул а иртет.

## Пĕрремĕш акт

Чĕмпĕр хулинче. Пĕчĕкçĕ тĕксĕмрех пӳлĕм. Урайĕнче унта та кунта кĕнекесем. Кăмака умĕнче койка. Иванов сĕтел умĕнче çыркалать, пĕрмаях пирус туртать.

### Пĕрремĕш курăну

Иванов

Çулла пасар урамĕнче
Ырхан артист, Китай çынни,
Сар питлĕскер, çĕçĕ хыпатчĕ.
Эп те çавах, хам чĕрене
Касатăп та, анчах укçашăн,
Çиес пĕр татăк çăкăршăн
Ылханлă „Библи" куçаратăп.

(Кĕнекине хупать).

Çитет!

(Уткаласа çӳреме тытăнать).

Укçа! Укça çынна!
Шăши хышлатăрччĕ ăна.

(Микки кĕрет)

Микки

И-их... Сан пӳлӗмӳ йӗркесӗр!
Кив пӳрчӗ суккăр юмăçăн
Кунтан таса пуль Силпире?..

Иванов

Силпи... Унта эп те тасаччӗ.
Кунта вӗт Чӗмпӗр. Чӗн вылять.
Пӗлместӗн-и пӗр лайăх юрă:
„Чӗмпӗр çинче чӗн вылять,
Хусан çинче хут вылять“.

Микки

Ман асатте ӗлӗк юрлатчӗ
Ăна.

Иванов

Халь те, пичче, нумайăш
Юрлаççӗ.

Микки

Мӗн çинчен калать
Çав юрă, Кӗçтенттин?

Иванов

Ха-а...
Кулапайсем эс тӳлемен-и?

Микки

Тӳленӗ. Хулӑ ҫурӑм урлӑ
Иртни те пулнӑ.

Иванов

Хулӑ ҫеҫ.
Чӗнне ан лек,—юн сирпӗнет.

Микки

„Хусан ҫинче хут вылять“—
Тени мӗн?

Иванов

Астӑватӑн пулӗ,
Пире кӑвак сухал директор
Шкултан кӑларчӗ хӳтерсе.
Шур хучӗ килчӗ Хусантан[1].

Микки

Ҫитет. Ӑслӑ ҫынсем калаҫчӗр!
Шӑлса каям-ха урайне.

(Шӑлма тытӑнать).

Иванов

Паян хыпар тавраше ҫук-и?
Кала ха, манӑн почтальон!

Микки

Килкартинче лавсем пасар пек.
Кам ашшӗ пурлӑхлӑ, пуян,—

Ăна хуплу та пиçнĕ хур.
Кам ашшĕ юрлă—пӳремеç,
Е кукăль—çавă кучченеç.
Çăпатасем çеç лавĕпе.

Иванов

Унтан турра шĕкĕр. Чăвашăн
Телейĕ пысăк ку енчен.
Ăна тума эпир пĕлетпĕр.

Микки

Эс те?

Иванов

Пĕлмесĕр. Çич çултах
Хуçаттăм çăпата.

Микки

Ăста.

Иванов

Сурма та юраман ăсталăх.
Ачасенчен нумайăшĕ
Кунта ырхан та çăпаталлă.

Микки

Кунтан тухсан, хисеплĕ пулĕç:
Хăшĕ—учитель, хăшĕ—пуп.

Иванов

Çĕтĕк сăхманлă ашшĕ-амĕш
Кунта ертсе килнисене,

Ăшă алса-чăлха вĕсемшĕн
Çыхнисене, чунран тăван
Вĕри куççуллĕ халăхне
Манма пултарĕç-ши вĕсем?

Микки

Илтмен-и эсĕ, Кĕçтенттин?
Ача чухне директор Якăлч
Хăй те кĕтӳçĕ пулнă, тет.

Иванов

Илтмесĕр! Илтнĕ. Çын хыпарĕ
Тĕп-тĕрĕс.

Микки

Ашшĕ-амăшне
Пĕлмест, тет, вăл, директор Якăлч.
Сар вĕлтĕрен таврашĕнче
Тупса, ачасăр чухан çын
Усрав туса ăна ӳстернĕ.
Кăнна Кушки ял çыннисем.[2]
Çапла калаççĕ.

Иванов

Ун телейĕ
Çунатлă çав, Микки пичче.
Хăватлă вăл. Пĕччен кĕтӳçĕ
Мăнтаран пирĕн халăхран
Çӳле çĕкленнĕ, вырăн илнĕ.
Унччен нихçан пĕр чăваша та
Çап-çута хăйĕн алăкне

Уçман Хусан университечĕ.
Кушка чăвашĕ çеç анчах,
Хăюллăскер, улпутсемпе
Ларма пултарнă юнашар.

Микки

Халь те чăпăрккине усрать, тет,
Шап-шурă пурçăн ăшĕнче.
Телей шăпи—кĕтӳçĕ пулнă,
А халĕ генерал.

Иванов

Çапла,
Микки пичче! Вăл ватă, чаплă,
Çапах та ĕлĕк аллисем
Тăпраллă, пылчăклă пулсан та,
Кăвар пек пулнă тап-таса.
Халь аллисем юртан та шурă,
Çĕрри те ылттăн—пурпĕрех
Варланчăк.

Микки

Кĕçтенттин ачам!
Ку вăхăтра çиллеслĕ эсĕ.
Директор Якăлч илтĕ те,—
Мĕн калĕ?

Иванов

Илтĕ. Илттĕрех!
Вăл хирĕç нимĕн те каламĕ.

Ăна вăрçатăп та, анчах
Пĕлетĕн-и, Микки пичче?

Микки

Мĕскер пĕлме? Куллен ятлатăн.

Иванов

Ăна чунтан саваттăм эпĕ.
Вăл пулмасан, нихçан та пирĕн,
Мăнтарăн ирĕксĕр чăвашăн,
Хисеплĕ шкулĕ те лармастчĕ
Çак аслă Чĕмпĕр варринче.
Эп астăватăп: вăл мана
Килне чĕнетчĕ хăй патне,
Кĕнекесем çырма хушатчĕ,
Итлетчĕ ман сăввăмсене.
Çухалчĕ канлĕ пурăнăç...
Хаяр хĕн-хурлăх çитрĕ: Лартрĕ
Мана вăл „Библи" куçарма.
Ытла усал. Çаплах кĕтӳçĕ!
Сӳспе тӳленĕ чăпăркки
Айван, чĕлхесĕр выльăх çиййĕн
Ĕлĕк выляна шилесе,
Хура йĕрсем касса хăварнă.
Анчах та выльăх—выльăхах,
Ялан тӳсет—ун тирĕ хулăм.
Вăл халĕ урăхла кĕтӳçĕ,
Пире этемсене кĕтет.

Туя та, ирĕк те, вăрçу та
Пурте хăватлă аллинче.
Пур пирĕн чун, чĕлхе, анчах та
Кам умĕнче сăмах тытас?
Хирте пĕччен вучах çунать-и?
Вăл кĕлленет те çилленет.
Çаплах çунать ăшра чĕремĕр,
Тĕтĕм те çук, ăшши те çук.

Микки

Аçу-аннӳ çĕрме пуян,
Çапах çакăнта хĕн-хурлă
Иртет сан çамрăк пурăнăç.

Иванов

Йыт мăнтăр та, какайĕ унăн
Çимешкĕн юрăхсăр.

Микки

Пуянăн
Хӳри куянăн.

Иванов

Ун пĕр пусĕ
Выртать çич чулăн айĕнче.

Микки

Эп астăватăп: эс ачаччĕ,
Ак çакăн çӳллĕш.

(Аллипе кăтартать).

Атăллă,
Нар пекчĕ хĕрлĕ питӳсем.

Иванов

Хăрушă шавлакан йăмралăх
Айне кĕтĕм те тăхăр çул
Упа пек пурăнатăп эпĕ.

(Микки çӳп-çапа сăхман арки çине пуçтарать).

Микки

Хуллен хăратăн, Кĕçтенттин.
Пĕччен сана кичем, тăванăм!
Чипер мăшăр тупасчĕ сан.
Утас-ха.

(Микки каять).

Иванов

Çак Микки кăна
Хĕл кунĕнчи кĕрĕк пек маншăн.
Кăмăл чакать-и, е чĕре
Тапма пăрахнă пек сип-сивĕ.
Микки килсессĕн—ăшă, уçă.

Калаçнă хыççăн юн вылять.
Е хăшпĕр чух вĕри çанталăк
Çунать те манăн чĕрере,
Мунча пек ялкăшать çанçурăм,
Куç хуралать. Микки килсен,
Пурте сӳнет, каллех эп лăпкă.
Ялта эп илтнĕччĕ халлап:
Пушар тухсассăн, кăвакарчăн
Тумламăн шыв сыпа-сыпа
Тăксан, çунмасть, тет, çын кил-çурчĕ,
Пичке тулли шывран та унăн
Хăватлă, тет, çăвар тумламĕ.
Çав вăхăтрах хура çăхан,
Ĕмĕр хуşши ылханлă кайăк:
— Çын çурчĕ ялкăштăр!—тесе
Хаяр кăранклатса вĕçет,—тет.
Тип-типĕ улăм пĕрчисем
Çӳлтен тăкать, тет, çĕр çăтманă.
Çăханан йăвинче типсе
Чĕре çунса кĕлленнĕ чух
Микки вăл манăн кăвакарчăн.
Çӳл ту çине хăпарнă май
Алла туя тыттарнă евĕр
Мана вăл пачĕ чĕр хăват.
Ĕçке ерсе чирленĕ çыннăн
Анратнă мухмăрне уçма
Эрех черкки тыттарнă пек,
Эп пурăнăç куркисене
Ĕçсе вăйран кайсан, çăмахĕ

Черкке пек туйăнать мана.
Ăна эп витĕр ăнланатăп:
Мăшăр тупасчĕ санăн, тет.
Тупсан вара? Ăçта уттарăп?
Хама тӳсме çук йывăр хурлăх.
Хама та тăвăр пӳлĕмре.
Хам та телейсĕр,—арама
Хăварăп-и телей шăписĕр?
Авланăп та, пыра киле,
Тата ача-пăча çуралĕ.
Ăçта, ăçта чикме пултарăп
Асап амантнă пуçăма?
Кĕрхи йĕпе-сапа пулсассăн,
Пуса карти шуралнă пек,
Куççулле кунсенче шуралĕ
Кĕрхи каç пек хура-ман çӳçĕм.
Пулмасть!

Тĕнче епле хăрушă!

Çуран çӳрет те тĕрĕслĕх!
Çунат çинче вĕçет улталăх.
Ак „Библи“ куçаратăп эпĕ.

(Кĕнекине уçать).

Ак Соломон[3], вĕт вăл пророк,—
Хăйĕн кăна пин арăм пулнă.
Святой! Юрлатпăр юррине.
Святой-и Соломон? Шуйттан-и?
Пин арăм пĕр çынна анчах.
Этем-и? Ирсĕр аскăн йытă!
Йыт мар. Чĕлхе те тăлланать.

Е... Яковлев каларĕшле:
Разбойник этак так, мошенник!
Пин арăм! Тура кĕнеки!

(Кĕнекине урайне вăркăтать).

Пĕр савнă арăм çеç илме те
Харатăп.

(Чӳрече умне пырать).

Çуркунне. Йăмралăх
Шавлать. Каясчĕ те яла
Силпи улăхĕнче утасчĕ,
Çăлкуçĕ шывĕпе çусан,
Çуталĕччĕ шупка пит-куçăм.
Тахçан ача чухне пĕр тополь[4]
Тăван кил-çуртăм умĕнче
Лартса хăварнăччĕ. Вăл халĕ
Шавлать-ши?

(Алăка шаккани илтĕнет).

Кам унта?

Вознесенский

Уçсамăр!

Иванов

Хура çăхан килет. Кĕрсемĕр!

(Вознесенский кĕрет).

Вознесенский

Мĕнле сывлатăр, Константин
Васильевич?

Иванов

Çӳлти аттемĕр
Сыхлать мана, хăй чурине.
Христос ашакĕ[6] пек канмасăр
Утатăп-ха. Ларасчĕ сирĕн.

(Пукан парать. Вознесенский ларать).

Вознесенский

Чĕлхе сан çивĕч кастарать,
Анчах та вырăнсăр.

Иванов

Ман пӳлĕм
Пăртакçă тăвăр, çавăнпа
Пурне валли те кирлĕ вырăн
Тупаймăп.

Вознесенский

Шăпăр вырăнне
Кунта выртать иккен сан „Библи".

Иванов

Эсир килессине сиссе,
Кĕтмен çĕртен хăвăрт чунланчĕ,
Вăл сирĕн сывлăш туртнипе

Сĕтел çинчен анса, сасартăк
Шутарчĕ алăк патнелле.

Вознесенский

Чипер калаçăр, Константин
Васильевич!

Иванов

Питех те сапăр
Пулма тăратăп та, анчах
Килĕшмесен, мана каçарăр,
Варфоломей Фомич!

Вознесенский

Каллех
Эсир хăвăрăнне юрлатăр.

Иванов

Çапла çав хамăн. Çынăнне
Илме хушман çӳлти аттемĕр.
Тен сирĕн кĕввĕр лайăх-тăр, —
Тархасшăн юрласа кăтартăр.

Вознесенский

Эсир питех йĕркеллĕччĕ.
Ăçта вăл ĕлĕкхи тирпейлĕх?
Ăслă, йăваш та вăшавăт.
Сире пĕр çул вĕрентнĕ эпĕ
Столовăй патĕнчи класра.
Чи хыçалта эсир ларăттăр,

Алманчă ялĕ ачипе
Эсир çума çум юнашарччĕ.
Сире вĕрентекен Кочуров
Эсир сăвă пек çырнине
Пĕрре ман патăмра вуларĕ,
Вара эп сирĕн таланта
Туйса мухтарăм.

Иванов

Ăнланатăп:
Крылов[6] мучи каларĕшлĕ,
Куккук та автана мухтанă.
Тавах мухтавшăн. Эп те хатĕр
Сире итленĕ хыççăнах
Çырма мухтавлă юрă-ода[7].
Ĕлĕк вĕрентнĕ чух, эсир
Класа кĕрсен, шăна вĕçни те
Илтĕнмелле лараттăмăр.
Чÿречене уçса ал-напăл
Эсир тула сураттăрччĕ.
Пĕрре çил вĕрчĕ, сирĕн сурчăк
Тÿрех тĕлпулчĕ ман пите.

Вознесенский

Шала кĕрсен, аташасран
Хăруша пулĕ, Константин
Васильевич!

Иванов

Тăхтăр! Ан пÿлĕр!
Пире вĕрентнĕ чух, ялан,

Ыйтма тăрсан: „Вĕçне çитерĕр!“
Тесе хăвăр калаттăрччĕ.
Эсир историкчĕ, учитель.
„Мамай“ тесе виртлемелли
Ят панăччĕ сире пăлхавлă
Пĕрремĕш класăн ачисем.
Чăнах та, нумаях тăмарĕ.
Иртменччĕ нарăс уйăхĕ —
Эпир пуçларăмăр пăлхавăр.
Директор çурчĕ тăрринче
Хĕрлĕ ялав вĕлкĕшнине
Эсир тен халиччен манман-тăр.
Кун хыççăнах Мамай похочĕ[8]
Пуçланчĕ хирĕçле. Пире
Пурне те хӳтерсе кăлартăр.

Вознесенский

Сире шелленĕ унчухне.
Ялти вĕри улма çиме те,
Тата парçа кукли чыхма,
Тӳшек çинче выртма ăсатнă.
Хăшне-пĕрне тĕрме тути
Кирлехчĕ. Халь те ирĕк шухăш
Вылять-мĕн сирĕн пуçăрта.

Иванов

Халь те тĕрме. Хĕвелсĕр пӳлĕм.
Кунта вылянчăк шухăш мар,
Пуç миминче мăк курăк ӳсĕ,
Чĕре хура кӳлленчĕк пулĕ.

Пăртак тăрсан, шапа сасси
Пуçланĕ манăн чĕрере.

Вознесенский

Тӳсес пулать. Кайран хăпарĕ
Телей те ырă пурăнăç.

Иванов

Çапла, Варфоломей Фомич!
Пăта çинче тӳсме пултарнă
Исус. Эсир мĕншĕн вара
Куçатăр тепĕр хваттере?
Кивви кăшт сивĕрех—тӳсесчĕ!
Шăнмассерен шур ӳтĕре
Тухан кашни ӳпне çăпаншăн
Сăвап вĕт лешĕ тĕнчере.

Вознесенский

Чуман лаша пекех ĕнерсĕр
Этем иккен.

Иванов

Тĕрĕс-тĕкел!
Чуман лаша лексен, начар вăл.
Пĕрре вăл пурччĕ пирĕн те.
Аптранипе атте пустарчĕ.
Какайĕ питĕ тутлăччĕ.

Вознесенский

Эсир лаша какайĕ çинĕ.
Тата кайман-и чӳк тума?

Иванов

Таван çĕрте Чӳк варĕ пур.
Унта пĕрре эп пулнăччĕ.
Кĕлтăвасса туман, çапах та
Тутаннă унăн пăттине.

Вознесенский

Эсир чăнах та киреметçĕ.
Ахаль пулсан, çӳреттĕрччĕ
Кĕлле.

Иванов

Унта ытла та пăчă,
Мĕншĕн каяс-ха ахалех?
Кунга ман кантăкăм яр уçă.
Кĕлтунă пур сăмах тӳрех
Çӳле каять. Çӳлти аттемĕр
Итлет мана, хăй чурине.

Вознесенский

Кун пек чурашăн тамăк вучĕ
Çĕлен чĕлхи пек çулăмлă.
Нихçан сӳнес çук шĕл кăварăн
Тахçан вĕрет, çыхланăрччĕ!
Тен „Библи“ куçарни хăтарĕ,
Сăвапла тăвĕ чунăра.
Васкасчĕ! Лермонтов эсрелĕ
Вылять пуль сирĕн ӳтĕрте.
Эсир мĕн чухлĕ çылăх пухнă,—
Шикленĕр лешĕ тĕнчерен!

Иванов

Леш тӗнчене кайсан, тӗлпулӑп
Сире, Варфоломей Фомич!
Унта калаҫӑпӑр, ал парӑп.
Унта куратпӑр: камшӑн тамӑк,
Кама ҫӑтмах унта?

Вознесенский

Ухмах!

Иванов

Ухмахшӑн кӗнеке ҫырман.

(Ручка тытать).

Перо сире! Халех ак тытӑр!
Хӑвӑр куҫарӑр, ӑслисем!

Вознесенский

Чӗлхӗр усаллипе анчах
Вӗҫерӗнчӗ кӗтмен сӑмахӑм.
Мана каҫарӑр, Константин
Васильевич!

Иванов

Кунтан халех
Тасалӑр, манӑн алӑк урлӑ
Ик урӑра хӑвӑрт каҫарӑр,
Кунтан чиркӳ патне куҫарӑр.

Вознесенский

Каҫарӑр!

Иванов

Урăра каçарăр!
Кĕнекине хамах куçарăп.

(Вознесенский каять).

Чăкăлтăша кĕместĕп, тенĕччĕ.
Миçе хутчен тупа туман-ши?
Паян каллех! Пуçа чикме,
Шăп çеç тăма пултараймастăп.
Иван Яковлевич патне
Тӳрех каять ĕнтĕ элекçĕ.
Илет хăйне хисеплĕ ят.
Сăпса йăви пекех ăшчикĕм.
Пĕр хулă курăнсан кăна,
Персе тухать çиллес вăй-халăм,
Сăхас та пĕтерес килет.
Суйма, пуçа тайма пĕлместĕп,
Çавна кура хам пуç çине
Асап та инкексем тиетĕп.
Кунтан хисеплĕ çулпала
Тухса каяймăп. Ырă вилĕм
Халех çитсен те, йышăнма
Эп хатĕр.

(Алăка шаккани илтĕнет).

Ырă çын килсенччĕ...

(Алăка уçать. Руфина кĕрет).

Руфина (*алă тытса*)

Чирленĕ пек вĕри-çке аллăр,
Тата куç айĕ те чĕтрет.
Мĕн сăлтавпа чĕрĕр хумханчĕ?

Иванов

Кĕтмен çĕртен темле сасартăк
Тăван яла тата йыттă
Асилтĕм-ха паян, Руфина.

Руфина

Вара хурлантăн-и? Йытти
Аванччĕ пулĕ.

Иванов

Чăн-чăнах,
Палкан тесе ăна чĕнетчĕç.
Ытла аванччĕ: çăмламас
Тата кустăрма пек хӳреллĕ.
Сĕм тĕксĕм каçсенче вĕрсен,
Сасси пĕр-пĕр чипер артист
Романс юрланă пек янратчĕ.
Анчах хисепсĕр вилчĕ вăл,
Талантлăскер, мăнтарăн йытă.
Çулла тыр вырнă вăхăтра
Пĕрре вăл кĕлете кĕрсессĕн,
Анне ăна-кăна сисмесĕр,
Ăна хăварнă питĕрсе.
Малтан вăл савăннă пулас,
Тăварлă шăрттана пĕр татăк

Хăвармиччен çисе пĕтернĕ.
Áшчикĕ çуннипе вăл шывсăр
Типсе уяр кун вилнĕ. Шел!

Руфина

Йытта шеллетĕп, тетĕн, Костя,
Ху ăшунта кулатăн тек.
Камран-ши? Халĕ манăн паппă
Кунтаччĕ. Тен унтан?

Иванов

Çу-ук!
Чăнах та йыт çинчен шутлатăп.
Эп Бальмонт[9] пек поэт пулсан,
Палкан çинчен куллен пĕр юрă
Çырса çеç ларăттăм.

Руфина

Ăçтан
Куллен çыратăн? Тема çитмĕ.

Иванов

Çитет! Хӳри çинчен поэма,
Сáмси пирки пĕр-ик сонет[10].

Руфина

Палкан таса тăпри çине
Куççуль тăкса, лорд Байрон[11] пек,
Çырман-и эсĕ эпитафи?[12]

Иванов

Карта хыçне ахаль пытарнă.
Çилсем укçа ыйтмасăрах
Пупсем пек кĕлтуса юрларĕç.

Руфина

Чуркӳ таврашĕ килĕшмест
Сана.

Иванов

Ытла .та юрататăп.
Пурне те пупсене пухса
Тăварлă шăрттансен какайĕ
Парса хăналăттăм, кун хыççăн
Хĕртсе çитерне мунчана
Ĕçме тумлам шыв та памасăр
Пурне те харăс хупăттăм.

Руфина

Ман паппăна?

Иванов

Пĕрле ăна та.

Руфина

Вара ăçта каяс-ши ман,
Тăлăх туратăн? Пĕлтĕм халĕ:
Тӳрех килетĕп сан пата.
Кичем те мар. Пулатпăр иккĕн.

Сана çапах хитре сӑмахшӑн
Пӗрре çеç, Костя, чуптӑвам.

(Чуптума тӑрать).

Иванов

Каç та пулман. Хӗвел те курӗ,
Çиленӗ те элеклӗ вӑл турра.
Аçушӑн турӑ питӗ çывӑх.

Руфина

Мана та тӑрӑхлатӑн-çке.
Ӑçта ман айӑпӑм? Эп саншӑн
Вута кӗме те хатӗр.

Иванов

Ан çилен!

(Хулӗнчен тытать).

Пӗлместӗн-и, ачам Руфина?
Пӑртан шӑраннӑ ман чере.

Руфина

Пӑр мар, юратура чӑн хурçӑ
Ӑвӑс пек ирӗлет.

Иванов

Ун хыççӑн
Эп юлӑп-и чӗресӗр.

Руфина

Ан хăра!
Çĕнĕ çемçе чĕре шăранĕ.

Иванов

Чул ту çинче çарран утаймăн.
Кунçулăн хытă аллинче
Мĕншĕн пулас çемçе чĕреллĕ?
Хам чĕрепех кĕресшĕн эпĕ
Хама ӳстернĕ нӳр çĕре.

Руфина

Санпа калаçнă чух, нихçан
Вĕçне çитеймĕ ман калавăм.
Юри альбом эп илнĕччĕ.
Сăна ӳкер-ха асăнмалăх.

(Альбомне сĕтел çине хурать).

Иванов

Кайран. Лăпкă чухне ӳкерĕп.

Руфина

Халех. Начар пулсан та юрĕ.
Талантшăн ҫаклăрах экспромт[13].

Иванов

Ларсамăр профильпе, Руфина!

(Сĕтел пĕр пуçне Иванов, теприне Руфина ларать).

Руфина

Кунта пĕр вата çеç профессор
Пĕрре вĕт килнĕччĕ.

Иванов

Пĕлетĕп.

(Пĕрмаях ӳкерет).

Руфина

Вăл Леонардо да Винчи[14]
Тесе ялан сана чĕнетчĕ.
Сана илсе каясшăнччĕ
Петербурга. Мĕншĕн каймарăн?

Иванов

Манран килет-и? Яковлев
Хуçа вĕт манăн. Сăнчăра
Лексен,—ниçта та пăранаймăн.

Руфина

Тарар-и иккĕн? Укçине
Тупатăп эпĕ.

Иванов

Ытла та-çке
Айван шутлатăн эс, Руфина.
Кирек ăçта кайсан та,—пурпĕр
Пĕр аршăнра тăвата шит.

Руфина

Паллах, пулмасть виç шитлĕ аршăн.
Мĕскер каласшăн? Паллă мар.

Иванов

Эппин калам, тӳрех ăнланăн:
Ăçта кайсан та, пĕр пекех
Хура хăрушă самана.

Руфина

Ялан çынсем çинчен шутлатăн.
Мансамччĕ эсĕ халăха!
Хăвна телей шăпи тивсессĕн,
Çитет.

Иванов

Ӳкерчĕк акă хатĕр!

(Альбомне парать).

Руфина

Ай-ай! Мĕскер?.. Пĕри ман паппă.
Тепри...

(Шухăшласа тăрать).

Иван Яковлевич!..

Пĕр йăвара лараççĕ иккĕн
Епле хăрушă çăхансем.
Кун пек усал карикатура[15]
Усраймăп хамăн альбомра.
Минтер çине чĕрĕп ямаççĕ.

(Татса урайне пăрахать).

Наркăмăшпа тен хутăш-тăр
Санри талантăн вăй-хăвачĕ.

Иванов

Лăплан, Руфина! Ман усалăм
Сана тивмест.

Руфина

Унтан та мар.
Тăпра айне пытарнă ылттăн,
Хуçи сасартăках вилсен,
Никамăн аллине лекмесĕр,
Пĕтет. Санра талант, анчах
Кама кăтартăн эс ăна?

Иванов

Талантлисем нумай. Пиншерĕн
Сухаçăсем уйхирсенче.
Вĕрентчĕр вĕсене, ӳстерччĕр!
Тен çитмĕл çичĕ аслă Пушкин,
Хирте сăвă çырас чухне,
Суха тăваççĕ пулĕ.

Руфина

Пăрахсамччĕ!
Каллех те халăх, халăх сан.
Хăвна сыхла!

Иванов

Юрать, Руфина!
Така шăрттанĕ евĕр „Библи“,

Çӳлти аттемӗр кӗнеки,
Кӗтет мана. Пӗр-ик йӗрке çеç,
Пăртакçă куçарам-ха.

Руфина

Çитӗ!

Иванов

Сана çитет. Васка!—тет паппăр.

(Иванов çырма тытăнать).

Руфина

Çынна хушать. Тӳшек çинче
Çур тавлăк хăй выртать.

(Руфина алăка вăр-вар çаклатать).

Иванов

Ун чанӗ

Укçа тăвать.

Руфина

Ау-у, Костя!..

(Алăка туртни илтӗнет).

Иванов

Руфина, ан айкаш!

(Алăка силлени илтӗнет).

Руфина

Ан уç!

Пӗтетпӗр.

Иванов

Уçмасан, халех
Çӳçне те вирелле тăратĕ.

(Алăк патнелле пырать).

Руфина

Ан уç!

(Чарма тăрать).

Иванов

Хурах пек, буртăпа
Ватса кĕме пултарĕ вăл.

(Уçать. Яковлев туяпа кĕрет).

**Тăваттăмĕш курăну**

Яковлев

Капла киревсĕр, этак так.
Эп Вознесенскисен тымарĕ
Ясар теменччĕ. Йăнăшнă.

(Туяпа шаккаса).

Калатăп аçуна, Руфина!

(Руфина чĕркуççи çине ларать).

Руфина

Иван Яковлевич! Тархасшăн
Ан калăр... Шеллĕрччĕ мана...

Яковлев

Ых, намăссăр, сысна çури!
Ху мăнтăрна тӳсмерĕн-и?
Сысна эс, этак так.

Руфина

Каçарăр.
Нимле те айăпа кĕмен.

Яковлев

Юрать эппин. Каламăп ĕнтĕ.
Килне кай. Марш! Ну?..

(Руфина ура çине тăрать).

Руфина

Тавтапуç!

(Пуçне усса тухса каять).

Яковлев

Хăвна тытма пĕлместĕн эсĕ.
Çапла юрать-и, Константин?

Иванов

Ним те пулман. Куçартăм эпĕ.
Пăхсамăр! Çĕнĕ листасем.
Чернил та типеймен.

Яковлев

Ĕçленĕ.
Мухтатăп уншăн. Чиркĕве
Çӳремелле çапах пăртакçă.

(Чансем кĕрлени илтĕнет).

Хăвна Христос ашакĕ—тетĕн,
Тен çавăнпа пуçна чиксе
Тăратăн пулĕ, Константин?

Иванов

Кичем.

(Чансем хытăрах кĕрлеççĕ).

Яковлев

Мĕншĕн?

Иванов

Ытла хăрушă
Чансем кĕрлеççĕ.

Яковлев

Хытăрах
Кĕрлеччĕр!

Иванов

Хулленрех çапасчĕ.

(Яковлев урайĕнчи хута илет).

Яковлев

Ҫăхан-и эпĕ, Константин?
Юратнă тусăм, ывăлăм,
Пыра-киле пĕрре ăнланăн,
Эп те сан пекчĕ, ырăччĕ.

(Иванова хулĕнчен тытать).

Иванов

Мана хăтарăр „Библинчен“.
Хам ăсăмпа хамах ҫырасчĕ.

Яковлев

Пĕлетĕп эпĕ, Константин,
Пултарăн, питĕ лайăх ҫырăн,
Анчах пичетлесен, пире
Пурне те ҫакă Чĕмпĕртен
Хуса кăларĕҫ.

Иванов

Ăнланатăп.

Яковлев

Ҫапах куҫар-ха „Библие“.
Унпа патшамăр умĕнче
Чее пулатпăр, ырă ятлă.
Шкула хупасшăн Петербург.
Асту, ҫăханĕ эпĕ мар.
Ҫăханĕ пысăк, этак-так.

Чаршав.

## Иккĕмĕш акт

Шыв хĕрринче. Йăмрасем айĕнче. Мунча курăнать. Аякра пĕрмаях шăхлич калани илтĕнет. Ватă пулăçă ларать.

**Пĕрремĕш курăну**

Пулăçă

Паян ăнмарĕ ĕç, шуйттан!
Çулу çинче пупа курсан,
Калла уттар, ĕçе ан кай та!
Шанманччĕ,—тĕрĕсех иккен.
Чăнах та, хапхаран тухсан,
Тĕлпулчĕ пуп, эсрел кĕрўшĕ!
Кĕлле каятчĕ, çавăнпа
Паян лекеймĕ ĕнтĕ пулă.

(Иванов кĕрет, шлепкине хывать).

Иванов

Пупа вăрçатăн, асатте!

(Пулăçă хăраса ўкет).

Пулăçă

Ахаль çеç, ăнсăртран. Сисмесĕр
Сăмах вĕçерĕнчĕ.

(Хăйне хăй шăппăн вăрçса).

Э-эх,

Ку чĕлхене...

Иванов

Ан та куллянăр.
Пупа вăрçсан та çылăх мар.

Пулăçă

Ыттисене пĕлместĕп. Пирĕн
Усал çав пупĕ, хăямат.

Иванов

Хăть те мĕнле çăхан ан пултăр,—
Пĕр пек вĕсем. Какай çиме
Пурте сăмсаллă.

Пулăçă

Пирĕн пупĕ,
Чăваш пулсан та, кĕвĕсĕр.
Хам çитмĕлте, тĕне кĕменччĕ.
Лаша какайĕ çинĕшĕн
Куланайсем мана хуртарчĕ.
Ик сурăхпа хăрах ута
Сутсан та,—саплама çитмерĕ.
Ав çавăнта, шыв хĕрринче,
Хура мунча пекки ман пурччĕ.
Суттарчĕç. Унăн выранне
Вĕлтĕренсем те пуснă халĕ.
Тĕне те ирĕксĕр кĕме
Тӳр килчĕ манăн, вата çыннăн.

Иванов

Кам сирĕн пупăр?

Пулăçă

Икасух
Илье. Тен унăн ывăлне
Эсир пĕлетĕр?

Иванов

Николай
Икасов мар-и?

Пулăçă

Хураскер.
Ахвитсере тухса чапланчĕ.
Ун ашшĕ килĕнче хĕр тарçă
Ĕçлетчĕ ĕлĕкрех. Çавна
Ача тутарчĕ те çухалчĕ.

Иванов

Ачи сывах-и?

Пулăçă

Пиллĕкре.
Телейсĕр çыншăн пур-и вилĕм?
Ялтан яла çӳрет ун амĕш,
Ыйткалакан. Илемлĕччĕ.
Асап пĕтерчĕ. Карчăк, тейĕн.

Иванов

Ылханлă ашшĕ Николай
Çап-çамрăк, хĕрсемпе ĕнер
Ташлатчĕ.

Пулăçă

Пулăшу çинчен
Ăна систерĕр. Тен сире
Вăл итлĕ.

Иванов

Кашкăр сурăха
Шеллемĕ.

Пулăçă

Тунката çине
Ларсамăр-ха!

(Иванов ларать).

Иванов

Вăлта вăлтать-и?

Пулăçă

Кĕтӳ кайманччĕ, ир-ирех
Кунта килсе пĕрер шӳрпелĕх
Тытса каяс-ха тенĕччĕ.
Пĕр пулă та пысăкраххи
Лекмест. Çын мар, шывсем те чухăн.
Хам асатте каланине
Хальхи пек лайăх астăватăп:
Кунта хура вăрманччĕ, тет,
Тулличчĕ, тет, упа та пурăш.
Лере çӳлте хăрăк йăмраллă,
Хĕрлĕ çыранлă пĕр вар пур.
Унта эп астăвасса та-ха

Çăра кăна усрав вăрманччĕ,—
Мăйăр татма çӳреттĕмĕр.
Йĕп куç шыранă пек пăхсан та,
Паян ху арăмна хĕртме
Патак тавраш̆ĕ те тупаймăн,—
Çара. Авал хĕвел çуттисĕр
Çăра хура вăрман кашланă.
Пăкачава савса пуç тайнă,
Пăлханнă пирĕн ял унта
Патша çарĕсенчен пытаннă.
Чĕлхесĕр пулнă, тет, вĕсен
Юратнă харсăр утаманĕ.
Вăл çамрăклах, тет, пулнă таркăн,
Çĕршыв тăрăх нумай çӳренĕ,
Пĕр лекнĕ,—Кĕтерне патша
Кастарнă унăн чĕлхине.
Ун ячĕпе çав вырăна
„Чĕлхесĕр вар“—тет пирĕн халăх.
Унта халь акăш-макăш пысăк
Чулсем выртаççĕ хуралса.
Пăлхавçă тимрĕççен вучахĕ
Унта-мĕн пулнă, çавăнпа
Çăлне—„Хĕç шывĕ“ тенĕ халăх.

Иванов

Унчух çакман-ши пупсене?

Пулăçă

Э-е, çакмасăр. Çакнă ĕнтĕ
Пупне те аслă улпутне.
Сăртра ларать „Улпут юманĕ“,

Çаплах калаççĕ халĕ те.
Çĕр улпутне çаксан, виç тавлăк
Улпут силленнĕ çил çинче.
Çĕрле тухать хаяр ун чунĕ,
Тесе ял халăхĕ унта
Юсман тата йĕрĕх икерчĕ
Тăкать. Улпут çиленнипе
Кĕсен-çăпан та касă чир-чĕр
Ярать, тет, халăх хушшине.
Киреметленнĕ унăн чунĕ...
Ача-пăча килет. Сентти те
Унтах.

Иванов

Мĕншĕн апла ун ячĕ?

Пулăçă

Нарспи текен пĕр хĕр çинчен
Таçтан вăл тупнă кĕнеке.
Ăна вулать,—ялти хĕрарăм
Куççуль татать те макăрать.
Эп хам итленĕ. Питĕ лайăх,—
Такам çырма пултарнă-ши?
Унта пур кăмăллă ача
Сентти. Ăна та çавăнпа
Ялта „Сентти" тесе чĕнеççĕ.

Иванов (*шăппăн*)

Тата çырасчĕ ман.

(Ачасем кĕреççĕ. Ухăсем тытнă. Чи пĕчĕкки кĕвенте утланнă).

Пулӑҫӑ

Сан ҫук-и,
Леш кӗнеке?

Ача

Илмен. Пӗлетӗп
Ӑна пӑхмасӑр калама.

Пулӑҫӑ

Сентти ачам, ӑна кам ҫырнӑ?
Илтмен-и эсӗ?

Ача

Иванов.
Мана атте ярминккене
Илсе каясшӑн Чӗмпӗре.
Ӑна унта куратӑп эпӗ.

Пулӑҫӑ

Ыр ҫыннӑм, Чӗмпӗр хулинчен
Эсир килмен-и?

Иванов

Чӗмпӗртен.

Ача

Пӗлместӗр-и Иванова?

Иванов

Курман.

Пулӑҫӑ

Сентти, кӑштах вула-ха
Кӗнекере ҫырнисене.

Ача

Ҫырма юхать кӗрлесе
Аслӑ ялӑн ҫумӗпе.
Хӗвел тӗрӗ тӗрлесе
Вылять унӑн шывӗпе.
Тӑрӑ шывӑн ӑшӗнче
Кӑвак пӗлӗт явӑнать,
Ватӑ йӑмра тайӑлса
Тӗсне пӑхса савӑнать.
Авӑ кӗпер ҫийӗнче
Старик ларать вӑлтапа,
Йӑпӑрт-йӑпӑрт пулллине
Улталасшӑн ӑманпа.
Ав ачасем ҫӳл енче
Шывра ишсе ҫӳреҫҫӗ,
Пулӑ тытан ваттине
Хирӗҫтерме пӗлеҫҫӗ.
Акӑ пӗр ҫын кӗперпе
Каҫса пырать ҫырмана;
Ҫырма урлӑ каҫрӗ те
Кӗрсе кайрӗ вӑрмана.

Пулӑҫӑ

Ман евӗр пулӑҫӑ ҫинчен
Каланӑ мӗн.

(Иванов ача патне пырать, пуҫӗнчен шӑлать).

Иванов

Мерттес, тăванăм,
Вĕрен те пысăк пул.

(Укçа парать).

Ача

Ялтан
Тухсан, каятăп Чĕмпĕре.

Пулăçă

Ав пĕчĕкки кĕвентене
Утланнă. Икасух ачи.

Иванов

Аннӳ килте-и?

Пĕчĕк ача

Çук, кайнă
Ыйткалама.

Иванов

Аçу сан пур-и?

Пĕчĕк ача

Пулман.

Иванов

Выля, ачам!

(Укçа парать. Ачасем шавласа каяççĕ).

Пулăçă

Мăнтарăн,
„Аçу сан кам?“—тесен, малтан
„Пуп ывăлĕ“,—текенччĕ вăл.
Çакна илтсен, пĕрре ял пупĕ
Хĕненĕ. Халĕ шарламасть.

(Туй шавĕ илтĕнет).

Иванов

Туй курăпăр.

Пулăçă

Ĕнер хĕрне инçе ялтан
Вăрланă, çăварне пусса,
Тултарнă чӳпĕк. Хĕр, мăнтарăн,
Кăштах вилмен. Юрлаççĕ те—
Хĕрĕ йĕрнисене манаççĕ.

Иванов

Хĕр пурнăçĕ чăхран та йӳн.

Пулăçă

Чăхха вăрла! Тытса хĕнеççĕ,
Тĕрме те сивĕ Çĕпĕр пур.
Хĕре вăрла!—Ялта хаваслăх,
Куççулĕ вырăнне сăра.
Мĕскер шутлать çĕрти патшамăр?

(Каччăсем алла аллăн тытăнса ташласа кĕреççĕ).

### Каччăсем

Туя кайса тайăнма
Çичĕ çулхи вăкăра
Уй варринче тытрăмăр,
Уйăх куçĕ тухиччен,
Хĕвел хĕмĕ кĕриччен
Ӳкертĕмĕр, пусрăмăр,
Вăкăр хулăм хăмпине
Çăка йывăç кĕлĕпе
Йăваласа виçĕ кун
Вăйран-халтан кайрăмăр,
Хур çăвĕпе çемçетсе
Чăн-чăн шăпăр турăмăр.
Шăпăр най-най найлатать,
Хай сассипе мухтанать,
Хĕрĕх туйра пултăм, тет,
Хĕрĕх пĕрмĕш туйĕнче
Хĕрлĕ питлĕ сар хĕре
Чипер арăм турăм, тет.

(Туй кĕрлесе кĕрет).

### Шăпăрçă

Асаттесем çак ват йăмралăх
Айне тăрса юрланине
Аса илер-и, ырă халăх?

### Сассем

Тăрас!

Пĕр сас

Йăмра çулçи пекех
Çупар-и алă?

Пулăçă

Эх, шўрпелĕх
Пулли лекмерĕ.

Пĕр сас

Мухмăр хыççăн
Шўрпелĕх лекĕ тепĕр ир.

## Мăнкĕрў

Аса илни çичĕ кун,
Кунта тухни виçĕ кун.
Утмăл çухрăм çеçен хир,—
Шак сиккипе килтĕмĕр.
Утмăл çухрăм сĕм вăрман,—
Ут юрттипе тухрăмăр,
Çăмарта пек утсене
Чĕн пушши пек турăмăр.
Утмăл çухрăм сĕм вăрман
Витĕр юртса тухнă чух
Хăла пăлан куртăмăр.
Ылттăн иккен мăйраки,
Чĕрни вĕçĕ кĕмĕлтен.
Мăйракипе шăйăрсан,
Типĕ тăпра айĕнчен
Сивĕ çăлкуç усăлчĕ,
Шывĕ вылять уйăхпа,

Çитмĕл курка, сар курка,
Пире кĕтсе ярăнать.
Çавна ĕçсен, вăй кĕчĕ.
Пăлан чĕрни пуссанах
Йĕр тăвать те—çул тăвать.
Çав çулпала килтĕмĕр.
Çитмĕл çухрăм çеçен хир
Урлă каçса иртнĕ чух,
Çил çунатлă урхамах
Мухтавлине куртăмăр.
Пуçĕ лекмест пĕлĕте,
Ури çĕре тивеймест,
Утни-юртни сисĕнмест,
Шыв пек юхать ярăнса,
Çил пек каять карăнса.
Урхамаха утланса
Туй тума та кĕрлеме
Вĕл вĕçтерсе килтĕмĕр.
Çеçен хирĕн варринче,
Çавра кӳлĕ варринче,
Ылттăн юпа тăрринче
Ăмăрткайăк куртăмăр.
Пăхăр ури çийĕнче
Каллĕ-маллĕ пăхкалать,
Мăшăр кĕмĕл çунатне
Лăстăр-лăстăр тукалать,
Ылттăн сăмси вăй калать,
Вăй калать те вăй кӳртет.
Çавăн вăййи сассине
Эпир илтсе килтĕмĕр,

Çӳрен утсен уринчи
Йӗс таканӗ айӗнче
Шурӑ чуллӑ çул çинче
Вут кӑларса иртрӗмӗр.

### Халӑх

Эпир каяс çул çине
Чакак-курак ларминччӗ,
Эпир илес хӗрсене
Каччӑ алли тивминччӗ.
Каччӑ тивнӗ кинӗмӗр
Çурхи хӑва еверлӗ
Авкаланӗ, ваталӗ
Пирӗн кӗрӳ аллинче.
Каччӑ тивмен кинӗмӗр,
Хура чӗкеç чӗппи пек,
Ачашланӗ, шӑлӑнӗ
Пирӗн кӗрӳ умӗнче.

### Шӑпӑрçӑ

Сӑра ӗçсен, чӗлхе çемçелӗ,
Ват çыннӑн пырӗ типнӗ пуль.

(Алшӑлли витнӗ чӗресрен алтӑр тултарать, пулӑçа парать).

### Пулӑçӑ

Саксем тулли ача-пӑчаллӑ
Пулма сӗнетӗп кӗрӗве!

Мăнкĕрў

Асаттесен йăлисене
Ан тиркĕр, палламан ыр çыннăм!
Тавсъе!

(Иванова алтăр тыттарать).

Иванов

Çак алтăр типнĕ пек,
Куççулсĕр пултăр пурăнăç!

(Ĕçет те алтăр тĕпне кăтартать).

Хĕрсем

Вуник чĕкеç пĕр кашта,
Юрлан юрри пĕтмерĕ.
Тантăшăмăр, куçăнта
Вĕри куççуль типмерĕ.

(Тутăрсем сулласа ташлама тытăнаççĕ).

Патак лексен, пуç шăтсан,
Çынсен умне ан курăн.
Юнна пытар, ан кăтарт,
Сурпан сырăн, пул шурă.
Ална çапса амантсан,
Ан çўресем хĕн-хурăн,—
Алса тăхăн, ан кăтарт,
Çынсен умне ан курăн.

(Каччăсем чĕн пушăсем силлесе ташлаççĕ).

Каччăсем

Пирĕн инке пуласси
Хăяр татма кайнă чух

Хăяра та палламан,
Пухса килнĕ вĕтĕ чул.

(Туй алă çупать, хĕвĕшет).

Сылтăм куçĕ ку енче,
Пирĕн йысна умĕнче,
Сулахайĕ, ай та хай,
Тепĕр каччă çийĕнче.

(Анюк пĕркенчĕкне пăрахса каять).

Каччăсемпе хĕрсем

Йĕс таканлă аттăмăр
Сĕвĕнтĕр тата пăртак!
Кĕр кĕрлетĕр ташшăмăр,
Тăпăр-тăпăр-тăпăртăк!

Мăнкĕрӳ

Хĕр тарнă.

Сассем

Вăркăнчĕ шыва.

(Халăх сапаланса чупкалать).

Мăнкĕрӳ

Вăрăмтуна пек найлатма
Халех пăрах, тĕнче ухмахĕ!

(Шăпăрçă çаплах шăпăрне калать).

Шăпăрçă

Хăвна пĕлесчĕ. Ăслă-и?
Çак ял çынни, ман çывăх кӳршĕ,

Пĕр-икĕ çăпата кантри
Тăссан, пулать килне çитмелĕх.
Çапах та çухрăмсем çинчен
Пăлан тытни пирки калатăн.
Ху çимĕк эрнинче йăлт ўсĕр
Выртатăн тўшеккў çинче,
Шăши те курайман. Пăлан-и?

Мăнкĕрў

Асаттесен йăли.

Шăпăрçă

Çапла,
Тăманаран хăçан çуралĕ
Ăс-тăнлă кайăк, хурчăка?

Мăнкĕрў

Сăхманунта мĕн чухлĕ саплăк,—
Çавна шутла!

Шăпăрçă

Хĕр вырăнне
Чулсем çыхса шыва ярасчĕ
Сана, саттин кĕпеллĕ йытă.

Мăнкĕрў

Апла иккен, чĕрре кĕме,
Ура хума шутлатăн эсĕ.
Ман патăмра ĕçленине
Манса кайман-и, мĕскĕн тарçă?

Шăпăрçă

Манман-ха, çилĕ килнĕ чух,
Янах çинчи кăвак сухалăн
Пĕрчисене шутласшăн эпĕ.
Сăхман çинчи хам саплăка
Пĕлсе тăратăп. Çирĕм иккĕ.

(Сухалĕнчен ярса тытать).

Мăнкĕрӳ

Тархасшăн чарăнччĕ!

Сассем

Силлес!

Шăпăрçă

Халь те силлетĕп-ха.

(Сухалĕнчен сĕтĕрет).

Мăнкĕрӳ

Типтерлĕ
Хăтлан.

Шăпăрçă

Пĕрчисене пĕрерĕн
Силлес-и хĕр асапĕшĕн?

(Пулăçă, Иванов тата ыттисем, йĕпеннĕскерсем, Анюка çĕклесе кĕреççĕ).

**Тăваттăмĕш курăну**

Пулăçă

Туй пек пулсанччĕ туйăр,—йурĕ.

Анчах та йывӑҫа касса
Пура тӑватӑр, пӳрт те хатĕр.
Ҫын чĕрине касма юрать-и?
Чипер кин туянасшӑн, кинĕр
Вилесшĕн.

Мӑнкĕрӳ

Авалхи йӑла.

Асаттесем ҫапла кӑтартнӑ.
Хам арӑма вӑрланӑччĕ.
Ҫӳрет-ха халĕ те сыв-сывӑ.

Шӑпӑрҫӑ

Мухтан, суя ҫӑвар такмакҫӑ!
Ху арӑмна хĕненĕ чух,
Хура вӑрман патак таврашӗ
Епле ҫитерчĕ-ши мӑнтарӑн?
Ху вӑкӑр пек, витре эрех
Ĕҫетĕн те пуҫлатӑн ташӑ.
Паян-и, е ыран вилес-и?—
Тесе ҫӳрет сан арӑму,
Пĕвĕ асат хуҫни пек кукӑр.

(Анюк тӑна кĕрет).

Мӑнкĕрӳ

Хĕр чĕрĕлчĕ. Сывал-ха, кинĕм,
Вӑйна пуҫтар! Чĕре суранĕ
Сапланĕ юрӑ-кĕвĕре.

(Пулӑҫӑ Анюка ура ҫине тӑратать).

Анюк

Мĕншĕн мăшкăл туса хăвартăр
Телейсĕр манăн чунăма?

(Йăмра çумне тайăнать).

Пулăçă

Этем вăл хаклă. Çуттĕнче
Вилме туман ăна, тăванăм.

Мăнкĕрӳ

Туя пуçлас! Кайран туй хыççăн
Çĕнĕ кĕрӳ, хăй пĕлнĕ пек,
Инкек-синкек çинчен калаçĕ.

(Туй шавлама тытăнать).

Каччăсем

Инке усал, хăрушă.
Савнă пичче, ан хăра!
Хивре явнă чĕн пушă
Ялан тăтăр пăтара.

(Ташлама пуçлаççĕ).

Мăнкĕрӳ

Сана мĕн тытамак тытать-и?
Мĕншĕн вĕрместĕн, шăпăрçă?

Шăпăрçă

Чуна сутман-ха шуйттана.
Вăрă этемĕн туйĕнче
Хам сывлăша та варламастăп.

Мăнкĕрӳ

Выля!

Шăпăрçă

Пĕрре çапсан, вылятăн
Сысна çури пекех куçна!

Мăнкĕрӳ

Çатан çурту пĕрер кĕллене,
Хумханĕ кашласа хупах.

(Хĕр патне пырать).

Айта, Анюк, пĕркен пĕркенчĕк,—
Куççуль таврашĕ курăнмĕ.

Анюк

Вĕлерĕр, çакăнта пытарăр!
Каллех пĕркенчĕк айĕнче
Лармастăп эпĕ.

Мăнкĕрӳ

Тен чĕн пушă
Кĕтетĕн, намăссăр ухмах!
Айта, каятпăр.

(Сĕтĕрет. Анюк йăмрана ыталать).

Иванов

Чарăнăр!
Кулни çитет сире, пăрахăр!

Мăнкĕрӳ

Э-е... Хута кĕме, студенсă!
Пĕлетпĕр, аслă патшана
Ӳкерессн çинчен эсир
Сăмах сарса çӳретĕр-и?
Кунта тăвасшăн-и пăлхавăр?
Халех чĕнес пупа!

Пĕр сас

Пуп ӳсĕр!

Шăпăрçă

Çăвар карма пăрах, такмакçă!

(Мăнкĕрĕве чышса ярать).

Тытма та хуптарма сан шухăш.
Кĕмĕл чĕрнеллĕ пĕр пăлан
Тытни те çитĕ.

Мăнкĕрӳ

Çĕр çăтман,
Чĕлхӳ ытла чараксăр санăн.
Питӳ хуралнă, кăшт çуталтăр.

(Çупса ярать).

Шăпăрçă

Ĕнсӳ пит мăнтăр,—япăхтăр!

(Ĕнсинчен çапать. Тытăçаççĕ).

Черкке аври пекех сухалĕ.

(Сухалĕнчен сĕтĕрет).

Мăнкĕрӳ

Ай-ай... Хăтарăр, ыра халăх!

Сассем

Чарасчĕ, тăвансем!

Пĕр саса

Пăртакçă
Шăртлатăр ĕнтĕ шăпăрçă.

Тепĕр саса

Кăштах пăхар-ха. Туй илемĕ
Çухалĕ, чарсанах.

Пулăçă

Çитет.
Суха тума вăйсем те кирлĕ.

(Иккĕшин хушшине кĕрет).

Шăпăрçă

Ан чар-ха, ирĕк пар мана.
Тăнлавĕнчен пĕрре çапам-ха.
Пĕлетĕн-и? Кĕçтет ман ала.

(Шăпăрçă урла карăнса çапать).

Мăнкĕрӳ

Çын тытмасан, ĕнерсĕрскер,
Тăр кăнтăрлах вĕлерĕччĕ.

Шăпăрçă

Сан пеккине вĕлернипе
Алла та юнламастăп эпĕ.

Мăнкĕрӳ

Туя пуçласчĕ, ырă халăх!
Пите кĕççе çĕлетпĕр-и?

Сассем

Çĕленĕ ĕнтĕ тахçанах.

Мăнкĕрӳ

Ыр ут та такăнать, атсемĕр.
Туйпа килни мирпе иртет.
Анюк хĕрĕм, пĕркен пĕркенчĕк!

Анюк

Хăвах пĕркен.

Мăнкĕрӳ

Чипер калаç.
Ваттисемпе тавлашаканăн
Чĕлхи хăрни çинчен илтмен-и?

Анюк

Хăрса ӳксен, питех аван.
Хурахланса вăрламăттăр
Эсир чĕлхесĕр выльăха.

Мӑнкӗрӳ

Пиртен тухман та пирӗн шухӑш
Йӑла ал-хапӑл кӑларман.
Асаттесен йӑли вӑл, кинӗм!
Вӑрланӑ—саншӑн савӑнӑç.
Тӗпкӗç хуçа пулса кӗретӗн
Пуйса мӑкланнӑ кил-çурта.
Çу каткинче пулсан пӗр алӑ,
Тепри пыл каткинче, тӑванӑм!

Шӑпӑрçӑ

Шӑши тытасшӑн ватӑ юс.

Мӑнкӗрӳ

Ӗçлес те çук. Тӑватӑ тарçӑ.
Йӑмралӑх сулхӑнне туйса
Çӳренӗ хыççӑнах канмалӑх
Шур акӑш пек тушек-минтерӗ
Вӗрсе хӑпартнӑ пек çемçе.
Шӑл çӗмӗрсе тӗнче телейӗ
Кӗрет, тӑванӑм, çӑварна.
Тарма юрать-и ырлӑхран?

Анюк

Çӑхан йӑви çемçе, анчах
Унта ларайӗ кӑвакарчӑн.
Тухъи пулсан, хӗрне те тупӑр.

(Тухъине хывса ывӑтать).

Мăнкĕрӳ

Ыраш çăмахĕ çиекен
Çиме пĕлмест иккен кулачă.

Шăпăрçă

Мана патша тусан та, эпĕ
Пĕçернĕ пулăттăм куллен
Сĕтпе юрса ыраш çăмахĕ.

(Халăх хушшинчен çамрăк кĕрӳ тухать).

Кĕрӳ

Кĕтӳçĕ хĕрĕ умĕнче
Пуçа тайма пире кам хушнă?
Юнтарнă-мĕн. Алри чĕн пушă
Ăс кӳртĕ тен.

(Анюка çапать).

Анюк

Çапсан та пурпĕр,
Чуна илсессĕн те, нихçан
Сан мăшăру пулмастăп эпĕ.
Çак пĕтĕм халăх умĕнче
Чăн кăмăлпа тупа тăватăп:
Хама ирĕксĕр илсен, ыран
Çухалĕ маншăн çуттĕнче.

Кĕрӳ

Каш-каш кашлать юман вăрманĕ.
Пире йӳн ӳкĕ тупăк хакĕ.
Чар çăварна!

Иванов

Аллу кĕске.

Килне кайса йытна хĕне-ха!

Кĕрӳ

Сана та-и? Хула тумтирĕ
Пулсан та, пуша хăрамасть.

(Иванова çапма тăрать).

Куçу çамку çине хăпарĕ!

(Шăпăрçă унăн пушшине хыçалтан тытать).

Шăпăрçă

Этем тĕк мар, часах вĕçеймĕ.
Авланасси çитет, ачам.
Юр пек çӳлтен çумасть хĕрарăм.
Пĕрре авлантăн, арăмна
Лаша çумне тытса кăкартăн:
Хĕрте-хĕрте хиртен килне
Таварăннă чухне вĕлертĕн.
Тепре авлантăн, тăранмарăн.
Пĕлтĕр мунча чульпе çапса
Куçне кăлартăн, суккăр турăн,
Кайран ăна та уйăртăн.
Ялан туйсем вĕçĕ-хĕррисĕр
Пулсан, мана та питĕ йывăр,
Кивелнĕ манăн шăпăрăм.
Çитет, ачам! урçа çынна
Чипер хĕр илмесен те юрĕ.

(Кĕрӳ пуçне чикет).

Мăнкĕрӳ

Ы-их, усал! Пуçна тур куртăр!
Эсрел илентĕр ӳт-тирне,
Чĕрӳ çине хăйне сак тутăр,
Ура усса унта вăл лартăр.
Хутаç çакса килрен киле
Ыйткаласа çӳремелле
Телейсĕр пурăнăç сан пултăр.
Вилсен, хаяр тăпру çинче
Çăра мăян ӳссе кашлатăр.

Шăпăрçă

Сан ĕнӳсем валли мăян
Пыратчĕ.

Мăнкĕрӳ

Пуç шăмми çинче
Çĕлен çӳретĕр, шăхăртăр!

Шăпăрçă

Ылхан!.. Сан ĕнӳне сăхсан,
Сĕтне ху ĕçĕн.

Мăнкĕрӳ

Ыра халăх,
Утар пуль хамăр килелле.

(Каяççĕ).

Пиллĕкмĕш курăну

Анюк

Ылханнă мĕскĕн пуçăма
Ăçта, ăçта кайса чикем-ши?

Шăпăрçă

Ан йĕр, хĕрĕм! Куççуль çăваймĕ
Тĕнчен шăрш çапнă пылчăкне.
Асап пулсан та, сывă пуç
Хăйне валли чипер çул тупĕ.

Анюк

Атте патне кайсан,—хăвалĕ.
Пуç йăтайми хисепсĕр ят
Ял хушшинче ĕнтĕ саланĕ.

Иванов

Ан кулянсам, Анюк. Пĕрле
Пыратăн Чĕмпĕр хулине.
Ăçта пулсан та, пĕр-пĕр вырăн
Тупма пулать.

Анюк

Юрать, ыр çыннăм.
Ĕçлессинчен пĕртте шикленмĕп,
Анчах та вырăс чĕлхине
Пĕлместĕп. Çавă çеç хăрушă.

Шăпăрçă

Ялта вилмест çерçи те выçă.
Хула вăл аслă. Икĕ алă

Пур инкекрен те ҫӑмӑллатӗ.
Хуллен вӗренӗн чӗлхине.

Иванов

Ялта ҫеҫ мар, чӑваш таврашӗ
Унта та туллиех ҫӳрет.

Шӑпӑрҫӑ

Эп каччӑ чух хам та чылай
Ҫӳренӗ Чӗмпӗр хулинче.
Урамсенче кушак е йытӑ
Тыта-тыта тирне сӳсе
Сутаттӑмччӗ. Музей текен
Пӗр ҫурт-йӗр пурччӗ,—ҫавӑнта
Илсе кай манӑн шӑпӑра.
Эп вӑтӑр ҫул ӑна калана
Куҫҫуллӗ мӑшкӑл туйсенче.
„Курак Карукӗ шӑпӑрне
Йӑлтах пӑрахнӑ вылямаʺ,—
Тесе ҫырса хума ан ман.
Музей курма килекенсем
Пурте вулаччӗр. Таврара
Ҫук урӑх ман пек чӑн ӑстаҫӑ.
Мухтавлӑ манӑн шӑпӑрӑм,
Сасси те уҫӑ янӑрать.
Итле!

(Вӗрсе хӑпартать те вылять).

Ҫӳлте хӑех пӗччен ҫӗ

Епле калать.

(Ҫӳлелле ывӑтса ярать те тытать).

Манран парне,—
Тытсамăр! Ме!

(Шăпăрне Иванова парать).

Пулăçă

Туйăн халăхне
Хĕртме туяччĕ! Пысăк пулă
Татса та кайнă вăлтана.

Чаршав.

## Виççĕмĕш акт

Пĕрремĕш актри пÿлĕм. Каç. Чÿрече умĕнче Павлов тăрать, „Чĕнтĕрлĕ кĕпер" юрă кĕввине сĕрме купăспа вылять. Сĕтел патĕнче Руфина ларать.

Пĕрремĕш курăну

Руфина

Çак пĕчĕк пÿлĕме кĕрсен,
Тухас килмест ниçта та манăн.
Кунта тем пысăкĕш тĕнче
Килсе хăпарнă пек хаваслă,
Илемлĕ туйăнать мана.
Пĕрмай музыка та поэзи.

Павлов

„Çăхан ури çинчи дворец"—
Тесе ят панă Кĕçтенттин.

Руфина

Паян ăста çӳрет-ши вăл?
Кунтан тухмасăр лараканччĕ,
Кăçал çухалчĕ канĕçĕ.

Павлов

Хай, Кĕçтенттин, каларĕшле:
Куллен çăралнăçем сухалĕ
Яш йĕкĕтĕн ĕçĕ сахал-и?
Чĕре чипер хĕршĕн хĕресшĕн.
Çапла, Руфина!

Руфина

Лайăх рифма,
Анчах та Константин чĕри
Кăрлач пек сивĕ пулĕ маншăн.

Павлов

Суя сăмах. Ытла çемçе
Чĕреллĕ çын вăл, Кĕçтенттин.
Имшер те лăпкă ӳчĕнче
Çын ăнланми кĕрлет çил-тăвăл.

Руфина

Хуллен хăрса пырать пулас.
Пит-куçĕ сăнĕсем шап-шурă.
Меншĕн вара?

Павлов

Питех те паллă,
Тĕлĕнмелли сăлтав та çук.

Поэт пулма, çӳлтен вĕçме
Çуралнă пирĕн Кĕçтенттин.
„Поэзи кирлĕ мар чăвашшăн",—
Тесе кăвак сухал директор
Çырма та чарчĕ. Ватă çыннăн
Хыт кĕрĕк пек чĕри сисмест.
Шуратăл хĕрринчи шур акăш
Кӳлленчĕк пылчăкĕ çине
Ӳксен, хĕç пек таса çуначĕ
Ванать те, çухалать ун хакĕ.

Руфина

Ахаль типсе çухаличчен
Кунтан каясчĕ Константинăн.

Павлов

Ăçта вăл кайĕ Чĕмпĕртен?
Кунта ӳссе, кунта пӳ илнĕ.

Руфина

Ăçта пулсан та вĕренме
Кайсан та лайăх пулĕ уншăн.
Çап-çамрăк,—çирĕм виççĕре.

Павлов

Вĕренесси çинчен ун шухăш,
Анчах та кирлĕ аттестат[16].
Ăна илме телей шăпи
Лекмен ăна, пĕрремĕш курс та
Пĕтереймен, кăвак сухал

Иван Яковлевич кунтан
Хуса кăларнă-çке пăлхавшăн.

Руфина

Хăй тусĕсем кăшт пулăшсан,
Хăпарĕччĕ, вăйне йĕркесĕр
Унта-кунта салатмĕччĕ.
Пурне те ĕлкĕресшĕн халĕ:
Шкулта та вĕрентет. Çитмест.
Ирех тытать те çивĕч пуртă
Такам валли пукан тăвать,
Кантăрлапа сава тытса
Васка-васка чутлать темтепĕр.
Ырса çитсен, каçпа вара
Палитра[17] унăн аллинче,
Тинех пулать хайхи художник.
Таçта чупать? Çырма машинка[18]
Тума пуçланă йывăçран.
Пурне те пуçтарса тытасшăн
Ăста та ылттăн аллипе,—
Пĕрне те çитермест вĕçне.

Павлов

Кам пулăштăр, Руфина? Хамăр
Юмах Иванĕ пек яка.
Мĕскер тăвасшăн Кĕçтенттин?
Çырса çеç пултăр! Уншăн кирлĕ
Кĕнекесем кăларакан.
Ăçтан тупан? Чăваш пуянĕ,
Сăхманлă Плюшкин[19] хыткукар,

Поэзи хӳхӗмӗ ҫинчен
Асне илме пултарӗ-ши?
Чӑпта сутас та мул пухас,
Куллен ҫисе тӑраннӑ хыҫҫӑн
Ҫу лекнӗ мӑнтӑр пӳрнине
Ҫулас, усал тӗлӗк курмасӑр
Ҫемҫе тӳшек ҫинче выртас.
Ак ҫакӑ альфа та омега[20]
Пулса тӑрать пуян чӑвашӑн
Ҫӗрсе мӑкланнӑ пуҫӗнче.
Орфей[21] юррисенчен те хаклӑ
Ӑна мӑкла така шӑрттанӗ.

## Руфина

Эсир, вӑрттӑн хыпар илтсен,
Вӑй-шайӑн уҫакан ҫын марччӗ.
Сире пӗр шанчӑклӑ секрет
Каласшӑн, Федор Павлович.
Ан манӑрччӗ: пӗр-пӗр элекҫӗ
Ҫӑварӗнче тӗрӗс сӑмахӑм
Ан пултӑр сухӑр вырӑнне.
Константина чунтан саватӑп,
Малта пулас телейӗшӗн
Чура пулма та хатӗр эпӗ,
Ҫапах та вӑл ялан хӑяккӑн,
Шӑл витӗр кулнӑ пек пӑхать.
Вӑл манӑн алӑра пулсан,
Кунҫулӗ пулӗччӗ йӗркеллӗ,
Хӑпарӗччӗ малашлӑх ҫулӗ.

Павлов

Аван çеç шухăшăр, Руфина.
Çапах та Кĕçтенттинĕн çулĕ
Яр уçă пуласси çинчен
Ĕмĕтленме питех те йывăр.
Хăçан чăваш чĕлхи хăвачĕ
Çĕр тăрăх ирĕк янăрĕ,—
Вара телейĕ унăн килĕ.

Руфина

Эсир те, вăл та Дон-Кихот[22].
Малтан асилĕр хăвăра,
Хисеплĕ вырăн йышăнăр.
Сире пĕлмесĕр, сирĕнсĕр
Ялан çăкăр чăмланă халăх
Халь те ача пек йăнăшмĕ.

Павлов

Хăш вырăнта ларма пултарĕ
Хĕрӳ чĕреллĕ Кĕçтенттин?

Руфина

Сахал-и вырăн таланта?
Малтанлăха хăть офицер.
Пыра-киле çӳле çĕкленĕ.

Павлов

Хăй амăш сĕчĕпе пĕрлех
Унта вылять поэзи юнĕ.
Çаплах вăл юлтăр ха, Руфина!

(Алăка шаккани илтĕнет. Павлов уçать.
Шутровпа Икасов кĕреççĕ).

**Иккĕмĕш курăну**

Икасов

Салам-аликкĕм иксĕре.
Ăçта уттарнă Константин?

Павлов

Нумай пулмасть, каçкӳлĕм, паçăр
Таçта шутарчĕ вăл.

Икасов

Каç çулĕ:
Гончаровка[23], ресторан.
Кĕрен те,—сăра ăстаран.

Руфина

Эсир илемлĕ калаçма
Вĕреннĕ, Николай Ильич!
Ытла янравлă сирĕн рифма
Тата аллитераци[24] пур.

Икасов

Манра поэзи хал-хавалĕ,
Поэзи туйăмĕ пурри
Сире тен парадокс, Руфина?
Айван ача чухне эп те
Пăртак куçарнă, çыркаланă.
„Талант пур сирĕн, этак-так",—

Тесе мухтатчĕ хушăран
Иван Яковлевич, директор.
Ларса канма та пӳлĕмре
Пукан таврашĕ çук мĕн сирĕн.

Руфина

Хуçи пукан тума ăста.
Çавна кура сăлтавĕ паллă.
Пушмак та ată çĕлекен
Ялан çӳрет çĕтĕк кунчаллă.
Çурта пек тӳрĕ пуç тытса
Утма сире вĕрентнĕ мар-и?
Ура çинче тăрсан та юрĕ.

(Пукан çинчен тăрать).

Ватта хисеп, Иван Петрович.
Ларсамăрччĕ.

Шутров

Пилленĕ вырăн.
Хушмаççĕ тиркеме ăна.

(Ларать).

Нумай кĕттермĕ-ши художник?

Павлов

Ытла тăма кирлех те марччĕ.
Мана кунтан ăсатнă май
Уйăрăлу таса черкки
Йăтма мансах кайман-тăр, ахăр.

Икасов

Нумайлăха каян-и, Федор,
Ыр мар-и Чĕмпĕр сывлăшĕ?

Павлов

Таса та уçă сывлăшĕ.
Сĕве хĕрри, йăмралăх айĕ.
Кунта вĕрентрĕм. Вĕренме
Хам та каятăп Хусана.

Икасов

Пĕр хуларах. Хайхи тин çывăх.
Пĕрне пĕри куркалăпăр.

Павлов

Ăçта унта хваттерĕр сирĕн?
Пĕлсен аванччĕ адрĕсне.

Икасов

Унта сахал çеç пулкалатăп.
Каçпа театр... ресторан.

Павлов

Ун пек çĕрте ытла çӳреймĕп.

Икасов

Укçа пирки ан та шиклен.
Телефонпа мана пĕлтерĕн,—
Укçи те шăнкăрт çеç.

Павлов

Тавах

Çемçе сăмахшăн. Çĕтĕк-çурăк
Пухма унта кайма тăманччĕ.
Ху тусанна шăлса тăма
Мана денщик тăвасшăн мар-и?

Руфина

Çерçи чĕппи пекех сăмахăр
Вĕçет-мĕн, Николай Ильич.
Пуç тайăр. Сирĕн пысăк айăп.

Икасов

Пуç таймăп таясса. Каçарăр,
Пĕлменччĕ Федор пуянне.

Павлов

Çын умĕнче мухтанассишĕн
Автан пек имĕш офицер.

Руфина

Вăл-ку çинчен ан та калаçăр.
Кăшт вăтанасчĕ иксĕрĕн
Хисеплĕ ват çын умĕнче.

Шутров

Яш-кĕрĕм шухăшĕ вылянчăк.
Пыра-киле, çул хыççăн çул
Иртсен, хăйсем тĕллĕн лăпланĕç.

Кун пек телей илме вĕсем
Кĕтмен. Çавна кура хаваслӑ.
Хура пўртре кӑвак тĕтĕм
Çăтса пурӑнакан чӑвашӑн
Хӑйĕн интеллигенци пур.
Кунта хисеплĕ, питĕ пысӑк
Иван Яковлевич тивлечĕ.
Суха ачисене вӑл пачĕ
Культура.

(Сасартӑках Иванов кĕрет).

**Виççĕмĕш курӑну**

Иванов

Çарӑк вырӑнне
Тыттарчĕ турӑ кĕнеки.

(Пальтопа шĕлепкине хывса çакать).

Ман пўлĕме йĕр тунӑшĕн
Хисеп сире, Иван Петрович.
Икасов чапĕпе пагонĕ
Ман тĕксĕм вырӑна кĕрсе
Çутатасса шанманччĕ эпĕ.

(Иккĕшне те алӑ парать).

Икасов

Хыпар-хӑнарсӑр çухалса
Ку таранччен ӑçта çўрерĕн?
Куç шӑрçинче кӑшт сисĕнет
Шӑв-шавлӑ ресторан илемĕ.

Иванов

Тӳрех кала: хупах пейзажӗ![25]
Хавасла сыпрамӑр тӑваттан:
Микки, пӗри Элшел чӑвашӗ,
Тата тепри Чистай тутарӗ.
„Йӗрек яна"—тесе юрларӑм.

Руфина

„Йӗрек яна"—тени мӗн вӑл?

Иванов

Ялта кӗтӳçӗ Эхметçан
Çапла юрлатчӗ. Куçарсан,
„Чӗре çунать" тени.

Руфина

Эклога[26]
Çырасчӗ сан Виргилий[27] пек.
Çав Эхметçан, Силпи Тетирӗ,[28]
Шӑхличӗ каласа вӑратӗ
Тӗтреллӗ улӑха.

Иванов

Икасов!
Çулла эп сирӗн ялӑрта
Тӗлпултӑм ӑнсӑртран куççуллӗ
Сентименталлӑ[29] пӗр сюжет.[30]
Пӗр аскӑн çамрӑк офицер
Пӑрахнӑ хӗр-ипраç çинчен

Çырас килет пĕр пысăк повесть.
Ман шухăшпа вăл Карамзинăн[31]
Мăнтарăн Лизи еврĕлĕ.

Икасов

Ман ял çинчен кайран ĕç хыççăн
Калаçăпăр, Иван Петрович
Кĕте-кĕте ырать те пулĕ.

Шутров

Яшсем калаçнă вăхăтра
Ырма-и шухăш вата çыннăн.
Кăçал пăртак тăрсассăн, эпĕ
Çитетĕп çитмĕл пиллĕке.
Менелникре хам ывăла
Парне туса парас килетчĕ:
Кăвак сухаллă портрета.
Тен, Константин Васильевич,
Ăста та çăмăл аллăр сирĕн
Ўкерĕ.

Иванов

Çук, портрет тавращĕ
Тухаймĕ çав, Иван Петрович.
Эп пушă вăхăтра анчах
Ахаль сăрланăччĕ. Парнелĕх
Тăваймăп.

Шутров

Господин Икасов
Каланă тăрăх, пысăк-мĕн
Талантăр сирĕн.

Икасов

Константин,
Мĕн туртăнатăн? Юрамасть.
Тупа тăватăп, тытăн çеç,—
Портрет чĕрĕ сăнпа выльнĕ.

Руфина

Выльнĕ çав. Эп те шанатăп.
Ĕçленĕçем кĕтмен çĕртен
Тен санăн чĕрӳнте вăранĕ
Сисмесĕр çыврăнă художник.

Иванов

Пĕчĕк ача чухне мана,
Кăвайт кӳртсен, тетте паратпăр,—
Тесе мухтатчĕç килтисем,
Пуçран шăлатчĕç, ачашлатчĕç.
Эсир те çавăн пек йăпанчăк,
Анчах ачалăх иртнĕ ман.
Тӳрех калатăп: çын портречĕ
Тухмасть.

Икасов

Айван ăс-тăнлă.
Ху ăмăрткайăк пек пулсан,
Мĕншĕн çерçи çеç вырăнне
Хăвна хуратăн, Константин?

Иванов

Манран комедири герой
Тăвасшăн хăтлантăн эсĕ.

Çерçи, хăмла пĕрчи хыпсан,
Хĕç выранне пĕр хыт-хура
Тытса хăпарнă пĕлĕте,
Кĕрешĕп тенĕ, мур илесшĕ,
Хăватлă ăмăрткайăкпа.
Эп те хама хам Репин[32] тем-и,
Курман-илтмен портрет ĕçне
Авантюрист пек тытăнам-и?

### Шутров

Ытла та чип-чипер ўкерчĕк
Ыйтасшăн марччĕ эп сиртен.
Этем сăнĕ пулсан,—çырлахĕ.
Ват старике ўкересси
Нумай-и вăхăт йышăнĕ?
Пĕрре сĕрсен—кăвак сухалĕ,
Тепре—сайра шап-шурă çўçĕ,
Тата тепре—пулать пит-куçĕ.
Ак хатĕр те хайхи портрет.

### Руфина

Мĕскер кăна вăл ўкермен-ши?
Тухъяллă хĕр, ыйткалакан,
Платник, чăвашăн килĕ-çурчĕ,
Чи лайăххи—хура йыт куçĕ,
Тата сăхманлă пĕр хресчен—
Чивил чăвашĕ, унăн та
Сухалĕ виçĕ пĕрчĕ çеç.

Иванов

Çапла, Руфина! Ман палитра
Хура тăпра тĕслĕ варланчăк.
Çăпатапа сăхман тусанĕ
Вĕçет. Ăçтан хаяр хăюллăх
Хăпарĕ ман? Ыр çын питне
Эп хамăн пылчăкла сăра
Епле пăрахăп? Ан çиленĕр,
Иван Петрович. Вĕренем,
Кайран ӳкерĕп.

Шутров

Хăнасем
Кĕрекере кĕтеççĕ пулĕ.
Пырса чыс тăвăр, Константин
Васильевич. Портрет пирки те
Калаçăпăр,—тен килĕшĕр.
Пĕрле хăна пулма чĕнетĕп,
Руфина, Федор Павлович,
Сире те, господин Икасов.

Павлов

Пит хапăлччĕ пыма, анчах
Паян каятăп Хусана.

Икасов

Рояль мана валли юри
Кадриль ташши вылятăрччĕ.
Пыратăпах, Иван Петрович!

Руфина

Эп те. Мана тустеп та юрĕ.

Иванов

Хам тусăма ăсатмалла.
Ăшă йыхравшăн тавтапуç.

Шутров

Вăхăт пулсан, час-час пыркалăр.

(Пурне те алă парса тухать).

Алло! Сыв юлăр, çамрăксем!

(Каять).

**Тăваттăмĕш курăну**

Икасов

Чăвашăн ăсĕ виçĕ çухрăм
Кайра çӳрет, тет, хăйĕнчен.
Çаплах мĕн сан та, Константин!
Сана Микки хуралçă мар,
Пиг пысăк савăтăн хуçи.
Унпа паллашнă хыççăн санăн
Мала кайма çулу яр уçă.
Паян каятпăр хăнана,
Портрет çырма шутла та килĕш.
Кайран хăвах тин ӳкĕнĕн.
Чавсу кунтах, анчах çыртаймăн.
Ăсу çитмест сан, Константин!

Иванов

Санран халччен кивçен илменччĕ.
Ăссем валеçнĕ вăхăтра
Икасов пек эп те килтеччĕ.

Руфина

Пĕр-икĕ сеансра çыраттăн
Шутровăн портретне. Килетчĕ
Сан аллăна укçа та, чап та.

Иванов

Чĕре каланине мансан,
Çырма пултарĕччĕç ик алă.

Икасов

Чĕре мĕскер кăна каламĕ?
Хура çӳçӳ кăвакариччен
Итле те лар. Хуллен чĕнмесĕр
Иртсе те кайĕ пурăнăç.
Çапах та пурнăç çинче
Хăйма пулса ишни те кирлĕ.

Павлов

Мĕнле хăйма? Ĕни ăçта?

Икасов

Ĕни — культура.

Иванов

Ха, пĕлменччĕ,
Чăваш кĕнекине хыпса
Кавлекенни—культура мĕн.

Икасов

Чăваш чĕлхи тискер. Вăл—варвор.
Пĕр шухăша ăнлантарма
Çитмест мĕнпур сăмах пуянĕ.

Руфина

Ыйткалакан хутаçĕ пек
Питех те чухăн лексиконĕ[33].

Икасов

Хăй чĕлхине пăрахăçа
Кăларнă хыççăн пирĕн халăх
Çухатĕ варвăр сăн-питне.
Çăпатапа чăпта пирки
Теори кăларма анчах
Чăваш чĕлхи çуралнă ахăр.

Иванов

Тата ялти чăваш пупне
Юрланăшĕн кĕлтунă чух
Парать вăл шутсăр пысăк тупăш.

Икасов

Манран кулни кунтах вăл юлĕ.
Çапах та эпĕ калани
Суясăр шухăш, аксиома.

Павлов

Уй-хирсенчи пин-пин сухаçă
Пĕрех сăмах та вырăсла

Пĕлмест. Вĕсем хăйсен чĕлхисĕр
Виç хурăн хушшинче аташĕç.
Вĕсен тути çине, Икасов,
Çăра çакасшăн-и?

Икасов

Çук, эпĕ
Вĕсем пирки сăмах тытмастăп.
Культурăн хаклă тĕшшине
Катма пултаракан çынсем,
Ман шухăшпа,—чăн пирĕн халăх!

Иванов

Укçасăр тарăхса сухаçă
Вĕренеймест. Ăна ăçта?

Икасов

Ытти-хытти вăл халăх çӳпĕ,
Çĕр хурчĕ, просто суррогат.

Иванов

Ху—пихампар-и эс, Икасов?
Крылов сысни! Юман айне
Чаватăн та, пĕрттех пĕлместĕн
Ун икелне ху çинине.
Чăн халăхăн хăйми те чапĕ—
Хура тăпра ачи—сухаçă.
Вĕсем—чăн халăх, тарăн тинĕс.
Карап çинчи пĕр мăнтăр пуп
Сурса хăварнă ирсĕр сурчăк...

Эс ҫавӑ, господин Икасов!
Тӑван чӗлхе вӑл халӑхшӗн
Хура каҫри ҫап-ҫутӑ уйӑх.
Ӑна погонупа витеймӗн,
Хуплаймӑн эсӗ, гренадер![35]

Икасов

Санпа пӗрлех вӗреннӗ эпӗ.
Ҫут уйӑхсӑр, чӑваш чӗлхисӗр
Малтан мала, ҫӳлтен ҫӳле
Каятӑп-ха. Анчах та эсӗ
Тухман-ха Чӗмпӗр картинчен.

Иванов

Сӗтсӗр те ҫӑмсӑр качака
Ту тӑрринче ҫӳренине
Лав туртакан ут пӑхнӑ евӗр,
Эпир те курӑпӑр сана.
Пире ҫӳлте ытла та сивӗ,
Аван кунтах та, аялтах.

Руфина

Тархасшӑн ҫитӗ. Ан тавлашӑр.
Эсир кунта халь килнӗ чух
Тен пароход ҫинче истори
Пулман-и, Николай Ильич?
Чӑркӑшиччен ҫавна пӗлтерӗр.

Икасов

Начар ҫӗрте ҫӳреп-и эпӗ?
Пӗрремӗш класс. Каюта уйрӑм.

Кăвак сухаллă граф та унăн
Çырла пек пиçнĕ хĕрĕсем
Çул тăршшĕпех туссемччĕ манăн.
Хĕрĕсемпе кадриль ташларăм.
„Эсир ăçтан?“—тесен, часах
Хама хисеплĕ титул тупрăм,
„Якутский князь“,—теме пуçларăм.
„Çеçен хирте ман пăлансем
Сахал тесен те икĕ пин“,—
Тесе суйма пултартăм. Шанчĕç.
„Манран пуян“,—тет вată граф.
Умран каймарĕç хĕрĕсем,
Халех качча пыма та хатĕр.

Руфина

Пит-куçăр сарлака, ўт сарă.
Чăнах та, Николай Ильич,
Сирте пурах якут сăнарĕ.

Иванов

Çўлтен çўле, малтан мала
Кайсан, пыра-киле çуралĕ
Суеçĕ тепĕр Хлестаков[36].

Руфина

Карамзинла пĕр çĕнĕ повесть
Çырас пирки эс, Константин,
Асăннăччĕ. Кĕскен кала-ха!

Иванов

Геройĕ—офицер, чăваш.

Икасов

Шутров патне хăна пулма
Эсир пыратăр-и, Руфина?

Руфина

Кăштах итлер-ха.

Икасов

Вăхăт иртĕ.
Пыма шантарнă сăмаха
Часах манма йăла çук манăн.

(Кайма хатĕрленет).

Руфина

Юрать эппин. Кайран та итлĕп.
Пырас!

(Каяççĕ).

**Пиллĕкмĕш курăну**

Павлов

Сасартăк Икасов
Сана итленĕ чух хĕрелчĕ.
Чăнах-и эс çырасшăн повесть?

Иванов

Ахаль Икасова тĕртсе
Каларăм-çке. Хăй яланче
Вăл пĕр хĕре ача тутарнă.

Ачи те сывă, амăшĕ
Ыйткалакан.

Павлов

Чăнах та князь.
Ултавлă çĕрçăтман Икасов,
„Русалка“ оперăн[37] геройĕ!
Этем-и вăл? Хăй ашшĕ-пуп
Хĕн-хурлă халăх тинĕсне
Сурса хăварнă сарă сурчăк.
Тĕрĕс каларăн, Кĕçтенттин!
Тата тепре вăйна пухса
Нарспи пекех чипер поэма
Е ман валли либретто[38] çыр.
Тен вăхăт çитĕ те пичетлĕç,
Ăна тен курĕ çуттĕнче.

Иванов

Сухапуç хыçĕнче хирте
Е шавлă ĕçкĕ-çикĕре
Хавассăр юрлакан чăвашăн
Хăй ăссăн çырнă опери
Хăçан шăранĕ-ши, Хĕветĕр?
Чăваш оперине илтсен,
Эп сан çинчен часах пĕр ода
Çырма пултарăттăм вăл кун.
Пуçламăшĕ халех, ак хатĕр:
„Хĕвел тухсан Хĕветĕр,
Эсир ăна пĕлетĕр“.

(Кулать).

Павлов

Паян Хӗвел тухман-ха маншăн.

Иванов

Хӗвел ансан, куян пекех
Çӳретпӗр.

Павлов

Хам çураличчен,
Тахçан Хурахапха чăвашӗ—
Сан пек талантлă Федоров[39]
Пӗр сăвă çырнă ман çинчен:
„Хӗвел ансан Хӗветӗр,
Эсир ăна пӗлетӗр".

(Микки кӗрет).

**Улттăмӗш курăну**

Микки

Ку пӳлӗмре халччен кулни
Пулманччӗ. Шав та çуй паян.

Павлов

Шав турăмăр, çуй турăмăр,
Микки тăван килессине
Малтан пӗлсех тăраттăмăр.

Микки

Аса килни—виç сехет.
Килме тухни—çич минут.

Урам урлăш улт хăлаç—
Пылчăк ашса, хĕн курса,
Ӳкес пекех тайăнса
Сирĕн пата утрăм эп.
Тăкăрлăк патне çитсен,
Ик алăкла лавкана
Ертсе кĕчĕç урасем.
Тарна майлă кĕленче
Эрне хушши эрленсе
Мана кĕтнĕ, тет, иккен.
Ун ăшĕнчи эрехе
Пĕрре сыпсан,—вăй кĕрет,
Иккĕ сыпсан,—куç-пуçа
Акăш-макăш курăнать,
Мачча çинчи таракан
Ылттăн пекех туйăнать;
Тепре сыпсан,—имшер çын
Тăйлăк-тайлăк уткалать,
Тӳшек тесе, саванса
Пылчăк çинче çывăрать.
Çакă ырă хăвата
Сире пăртак активме
Кĕсъе ăшне чикейсе
Илсе килтĕм, тăвансем.

(Сĕтел çине лартать).

Пушă вăхăт пулмасан,
Каçарăр.

Иванов

Хапăл такмакçа!

Микки

Пӳлӗмӗрте виҫ пукан,
Виҫҫӗшӗ те кивӗрех.
Пӗрин ҫине кӑшт ларма
Ирӗк памӑр-ши мана?
Эпӗ мар, ура ыйтать.

Иванов

Хисеп те ирӗк урӑра!

(Микки ларать).

Микки

Пирӗн ешӗл пахчара
Хитре сасла шӑпчак пур.
Паян тӑвӑр пахчаран
Вӗҫет асла вӑрмана
Ҫунаттине вылятма,
Саркайӑкпа тавлашма.
Шӑпчӑк та мар, хамӑр ҫын.
Хӗветӗре ӑсатма
Виҫӗ енчен виҫ черкке
Йатма хапӑл парӑрччӗ.

Иванов

Пиртен чӑн хапӑл ват ҫынна.

Павлов

Чӑтса пулмасть,—пурте кулар-и?..

(Кулаҫҫӗ).

Иванов

Сан пек такмакçă ахăрнех
Пулман-тăр хăвăр ялăрта.
Хăмлаллă пыл-сăра пĕр алтăр
Ĕçсен, чĕлхӳ кăвар пекех
Çунатчĕ пуль, Микки пичче.

Микки

Туй умĕн хам çӳрен ута
Виçшер ăскăç сĕлĕ параттăм,
Кăвак та симĕс лентăсем
Çилхи çине çакатчĕ арăм.
Туйра йĕнер çинчен анмасăр
Хапхасене пушпа çапса
Ай-ай, хĕрсе калаттăм та,—
Çăвар карса итлетчĕ халăх.

Павлов

Эс те хăвна кура поэт.

Микки

Поэт кам иккенне пĕлменччĕ.
Пĕрре директор Яколчран
Ыйтма хăюлăх манăн çитрĕ.
„Пĕлес килсен, калам эппин:
Поэт—разбойник, этак-так,
Усал чĕлхеллĕ çын вăл“,—терĕ.
Пыр типнĕ чух, пĕрер тумлам
Сыпса илер-ха, шăллăмсем.

Иванов

Хĕветĕр, саншăн çул курки.

Павлов

Виç çыннăн туслăх куркине
Хаваслăх пултăр, Кĕçтенттин!

(Микки черккесене тултарса валеçет).

Иванов

Çĕклетпĕр савăш куркине!

Микки

Ĕçхĕлсенче, çулсем çинче
Килте, хирте, шывра телейĕр
Сире ялан пăхса сыхлатăр.
Хăватлă пысăк çын пулма
Манран тивлет сана, Хĕветĕр,
Анчах мана та, Миккие,
Ан ман, çырса, тата çын урлă
Пĕлтер, тăванăм, сывлăхна.
Ман пек асап курни ан пултăр.
Тавси, юратнă шăллăмсем!

(Пурте ĕçеççĕ).

Павлов

Инçе, инçе таçта кайсан та,
Ман куçăмран сăну çухалмĕ,
Микки пичче.

Микки

Ан манăр çав.
Икасова паян тĕл пултăм,
Пахма ӳркенчĕ ман çине.
Кунта вĕреннĕ чух, шуйттан,
Ача-пăча виртленĕ хыççăн
Йĕрсе пыратчĕ ман пата.

Иванов

Ахаль сăмах сая ан ярăр.

Микки

Юлатпăр иккĕн, Кĕçтенттин.
Пĕр кун, эс чирлĕ выртнă чух,
Эп тухтăра кунтан ăсатрăм.
Начар—тет—санăн сывлăху.

Иванов

Микки пичче, йĕретĕн мар-и?

Микки

Ĕçсен, ман кăмăл хуçăлать.
Сана шеллетĕп, Кĕçтенттин.
Пĕрре ташлам. Выля, Хĕветĕр!

(Павлов сĕрме купăс калать. Микки такмакласа ташлать).

Микки

Карта хыçне кăнтăрла
Капкăн лартни аванччĕ.

Çăмăр хыççăн ухмахла
Карăш чĕппи çакланчĕ.
Карăш, ăнсăртран, юри
Ман килĕме пуйтарчĕ,
Ик ывăла ик ури
Суха тума вăй пачĕ.
Икĕ хĕре ик çунат
Качча кайса вĕçмелĕх.
Карăш пиçет, пăсланать
Туй халăхне шӳрпелĕх.
Пуçне кышлăп хам хамах
Туйсем хыççăн типтерлĕ.
Тĕкĕ канса çывăрма
Пĕччен пуçа минтерлĕх.

(Яковлев хуллен кĕрет, Миккие хыçалтан çухинчен тытать. Микки тем калас пек кăн-кан пăхкалать. Яковлев пӳрнипе юпать те, Миккие алăкран кăларать, хăй кăмака хыçне тăрать).

**Çиччĕмĕш курăну**

Павлов

Микки ăçта?

Иванов

Тарланă хыççăн
Канать пуль сивĕ çил çинче.
Юратнă юрă пурччĕ пирĕн,
Кăштах пароди[40] евĕрскер.
Çавна юрлатпăр-и, Хĕветĕр?

Павлов

Леш Патӗрьел таврашӗнчи
Юрра аса илетӗн мар-и?
„Мана атте шур пӳрт лартса"
Текен сӑввисене ху майлӑ,
Яковлева тӑрӑхласа,
Улӑштарса калаттӑн.

Иванов

Ҫавӑ.

(Павлов купӑс калать. Иккӗш юрлаҫҫӗ).

Ивановпа Павлов

Кӗнекесем Яковлев кӑларасшӑн,
Итем ҫинче чӑрӑш ӳссе ларсассӑн.
Итем ҫинче чӑраш ӳссе ларайме,
Кӗнекесем ҫут тӗнчене кӑлармӗ,—
Ирӗксӗрех кайма тивет Силпие.

Унта ҫулсем иртсессӗн, Кӗҫтенттинӗн
Шӑмми ҫинче ҫурхи тӗнче картинӗ
Ҫӗкленӗ, ҫӗмӗрт тумӗ шупкаланӗ,
Саркайӑкан юрри хавас шӑранӗ.
Ҫавна илтме кӗтетӗн-ши, Яковлев?

Яковлев

Мошенниксем, эрех те юрӑ.

Павлов

Иван Яковлевич, каçарăр!
Мана ăсатнă сăлтавпа
Кăштах кулкалани те пулчĕ.

Яковлев

Чăваш культури сĕрĕмĕ
Санран тухман-мĕн, Константин.
Халь те ăса кĕмен ухмахăн
Çав урнă шухăш пуçĕнче.
Каллех перпетуум мобилĕ[41].

(Ивановăн пиншак тӳмминчĕн тытать).

Чăваш мунчи пек пырăнта
Эрех шăрши те ăссăр юрă.

(Тӳммине тăпăлтарса илет).

Иванов

Чăваш шăрши тавраш̆ĕ çукчĕ
Хысна кăларнă тӳммере.
Ăна татма та кирлĕ марччĕ.

Яковлев

Сисмесĕр пулчĕ. Ан кӳрен.
Хăвах пĕлетĕн, ăнсăртран.
Старик эп, этакий-такой.

Чаршав.

## Тăваттăмĕш акт

Каçхине. И. Я. Яковлевăн хăна пӳлĕмĕ. Стенасем çинче портретсем. Пӳлĕм варринчи сĕтел çинче хаклă эрехсем. Малта рояль. Сылтăм енчи диван çинче Яковлевпа Шутров лараççĕ.

### Пĕрремĕш курăну

Шутров

Ман саватăм татти-сыпписĕр
Эрех çеç юхтарать. Çитмест.
Ытла ĕçе пуçларĕ халăх.

Яковлев

Хăватлă вăрçă, этак-так.
Çĕршывшăн пысăк çав инкекĕ.
Эп ӳкĕтлӳ тĕлĕшĕпе
Чылай çеç ялсенче çӳрерĕм.
Хуйха-суйха путланнă халăх
Куççуль тăкса ачисене
Асатнине пăхма та йăвăр.

Шутров

Чăвашсенчен салтак тавраше
Нумай та мар-тăр. Ачаран
Кашни чăлах та суккăр куçлă.

Яковлев

Мана çуратнă халăха
Ан тиркĕрччĕ, Иван Петрович!
Ун хушшинче те паттăрсем—
Юман пекех тĕреклĕ ӳтлĕ
Çынсем те пур, хуса çитсе
Пĕрре çапсан,—вилет сăр кашкăр.
Ача чух, эп астăвасса,
Пӳркел чăвашĕ Емелкке—
Пĕр ват çын пурччĕ, улăп, тейĕн,
Пĕвĕ капан пек пысăкчĕ.
Вăл çирĕм пилĕк çул хушши
Пĕрмай çӳренĕ салтакра.
Кашни тĕвик-тĕвик текерлĕк
Хăй шурлăхне мухтанă, теççĕ.
Хам та чăваш, çапах та манăн
Калас килет, Иван Петрович,
Чăвашăн суккăр-тĕккĕр мар,
Çăл пек таса куçли те пур.

Шутров

Юрланă чух та кăвакарчăн
Кăвак теме эпир вĕреннĕ.
Весен хушшисенче шурри те
Хутран-ситрен сайра тĕл пулĕ.
Эп сирĕн халăха хурлас
Темен, Иван Яковлевич.
Пыра-киле çухалĕ вăл,
Ăçта ăна малашлăх çулĕ?

Яковлев

Хăйне кура пĕр уйрăм çул
Пулмасть, пулман аваллăхра та.
Культурăпа чиркÿ хăвачĕ
Ăна хăтарĕ вилĕмрен.
Кăшт астивме сĕтел умне
Кайса ларар, Иван Петрович.

(Хире-хирĕç лараççĕ).

Çак Чĕмпĕрти чăвашăн шкулĕ
Çур ĕмĕр хушшинче чылай
Куçне уçтарчĕ халăха.
Ик вата çыннăн, хамăрăн,
Хăватшăн, этак так, çĕклер.

(Ĕçеççĕ).

Шутров

Культура халăх ăс-тăнне
Кĕрессине шанмастăп эпĕ.
Кăçал çулла Рим хулинче
Пулма тĕлпулчĕ ман телейĕн.
Пĕрре каçпа чечен Венерăн[42]
Таса статуйĕ умĕнчен
Иртеттĕмччĕ, кĕтмен çĕртен
Сасартăк путсĕр ÿсĕр юрă
Илтсен, пăхатăп: виç тутар
Тем тирĕ сĕтĕрсе пыраççĕ.
Ыйтса пĕлетĕп: тутарсем
Кунти енсем, Пăва тавраш.

Чăваш Рим хулине лексен,
Венера илемне пăхать·и,—
Çăпатасем сутма хăтланĕ
Е уçă пыршă магазинĕ.

Яковлев

Эп хам та чикĕ леш енче
Пĕрре кăна мар пулкаланă,
Анчах та çăпата сутма,
Чăпта çапма та тĕлленменччĕ.
Женевăра, пĕрре ĕçсен,
Чăнах та чăвашла пĕр юрă
Юрланăччe, ăна тунмастăп.

Шутров

Пурне те хăвăр çийĕре
Илсе тархасшăн ан кӳренĕр.
Тискер чăваш тăпри çине
Эсир культура акакан çын,
Тӳрех калас тăк, ветеран.[43]
Эсир пуçламасан, паян та
Чăвашлăхра чансен сасси
Кĕрлемĕччĕ, çаплах кашлатчĕç
Киреметсен вăрманĕсем.
Пире çеç мар, патшашăн паллă
Хисеплĕ сирĕн ырлăхăр.
Эп илтнĕччĕ, тухать, тет, имĕш
Кĕнекесен чăн кĕнеки
Хăватлă „Библи“ чăвашла.

Яковлев

Ҫак канӑҫсӑр ӗҫе кам хаклӗ?
Сепаратизм[44] саракан
Сӑпса йӑви тесе, шкула
Хупасшӑнччӗ министр Витте.[45]
Эп—ватӑ хурчӑка, сӑмсаллӑ,
Хама ҫырттармӑп, этак так.
Вӗҫтертӗм Питӗр хулине,
Тӳрех патша патне визит.
Пӑртак калаҫкаланӑ хыҫҫӑн
Патша умне, сӗтел ҫине
Чӑвашлана куҫарнӑ хулӑм
„Евангели“ кӗнекине
Тӳрех шаплаттарса ҫеҫ хутӑм:
— Ак,—терӗм,—хамӑр тунӑ ӗҫ!
Хӑй император Николай,
Патшамӑр, ҫакӑ аллӑма,
Ҫӑмлӑскере, тытса тавтурӗ.
Сиен проектлӑ господин
Министр Витте ҫавӑ кун
Чике тӑршшӗ ларса та юлчӗ.
Пӗлетӗр-и, Иван Петрович,
Мана патшамӑр алӑ панӑ,
Халь сирӗнпе калаҫакан
Ултавсӑр шӑмӑсӑр челхеҫӗм
Калаҫнӑ аслӑ патшапа.
Эсир пуян, анчах та урӑр
Патша йӗр тунӑ ҫӗр ҫине
Пусман-ха, хӑмӑр ҫырӑ куҫӑр
Курман патшамӑр мӗнлине.

Шутров

Пĕрре ярмăркăна кайсан,
Чулхулара çеç курнăччĕ.

Яковлев

Çапла, пĕлетĕп: унчухне
Пĕрлех вĕт кайнă иксĕмĕр.
Чулхулара ман шкулăн хорĕ
Патшамăр умĕнче юрларĕ.
Каллех те Николай мана
Юри чĕнсе илсе тавтурĕ:
— Мĕнле ĕçлетĕр?—терĕ вăл.
— Çĕрте патша, çӳлте пĕр турă
Тытса тăраççĕ тĕнчене.
Вĕсен хăвачĕпе чăвашăн
Шăпи телейлĕ,—терĕм эп.

Шутров

Сирте çитет пулас чеелĕх.
Ача чухне эсир сăхманлă
Кĕтӳç пулса хирте çӳренĕ,
Паян пуплетĕр патшапа,
Авал хутаç çĕкленĕ хул
Çинче те генерал мундирĕ.

Яковлев

Чеелĕхе пĕлмен сар тилĕ
Часах лекет те капкăна,
Тирне çуха туса çакаççĕ.

Шутров

Чеелĕх пулмасан, эсир
Паян та тарçă пулăттăр.

Яковлев

Тен сирĕн savăтра эрех
Юхтарăттăм, Иван Петрович.

(Икасов кĕрет).

**Иккĕмĕш курăну**

Яковлев

Телейлĕ-мĕн, Икасов эсĕ:
Пароходран тӳрех ĕçке.

Икасов

Телейĕ çук. Ыран ирех
Фронта.

Шутров

Пиртен хисеп те хапăл,
Мухтавлă пуласса кĕтетпĕр.

Икасов

Астивĕп нимĕç етрине,
Мухтавлăхне илеймĕп ахăр.

Яковлев

Мĕскер? Каяс килмест-и санăн?

Икасов

Çап-çамрăк чух вилсе çĕрме
Кам килĕшĕ!

Яковлев

Епле хăравçă!
Тумтир çĕтме те мухтама
Офицерсем тытмасть патшалăх!
Ахаль кĕле çинче утса
Ху ўтĕнтен тарна тăкмасăр
Чипер çўресшĕн, ватăлсан,—
Тўшек çинче вилесшĕн эсĕ.
Нумай укçа пĕтернĕ, çинĕ,
Илемлĕ хĕрсене чуптунă.
Фронта çитсессĕн, паттăрланăн.
Кунта ларса черкке сыпсан,
Хăравçă кăмăлу çухалĕ.
Икасовăн хавасĕшĕн
Тĕпне кăтарт, Иван Петрович!

Икасов

Иван Яковлевич, хавас-и?
Тен алăсăр-урасăр юлăп,
Тен манăн ўтĕм выранне
Пĕр тĕмеске тăпра хăпарĕ.

Яковлев

Хăпартăр çўлерех. Патшашăн
Вăрçа, эп хам вĕрентнĕ çын,
Кайсан—мана тулли хаваслăх.

Шутров

Патша хăвачĕшĕн вилсен,
Начар-и, господин Икасов?

(Яковлевпа Шутров ĕçеççĕ).

Икасов

Ăçта выртать-ши сирĕн чун?

Яковлев

Куян пек чунăра пăхсан,
Çĕршыв тусан пекех саланĕ,
Кунта, Сĕве çыранĕнче
Çич ют тăшман лаша шăварĕ.
Ăçта сан офицер хастарĕ!
Ĕçсе пĕтер те шалт тӳнтер!

Икасов

Кунта чĕре лăпланĕ, терĕм.
Эрех анчах хуйха мантарĕ.

(Янках ĕçет).

Тата тултарăр!

Яковлев

Çавăн пек
Ĕçсен,—илемлĕ çуттĕнче.

(Икасов ĕçет).

Икасов

Иван Петрович, маншăнах
Тата тепре тултарăрччĕ!

Шутров

Пĕлтĕр ман патăма пырсан,
Эсир аван ташланăччĕ.

Икасов

Халь тупă шавĕ айĕнче
Ман вилемĕн ташши пуçланĕ.

(Ĕçет).

Яковлев

Вилес пирки пăрах, Икасов!
Ăçтан пĕлетĕн, вăрçăра
Хастарлăхна кăтартăн та
Полковник титулĕ туянăн.

(Вознесенскипе Руфина кĕреççĕ).

**Виççĕмĕш курăну**

Вознесенский

Кунта туссем пуçтаранна.
Икасов пуласса кĕтменччĕ.
Ытла илемлĕ тĕлпулу.

Руфина

Иван Петрович патĕнче
Пĕлтĕр пĕрле ташлана хыççăн
Сире курманччĕ, яланах
Асраччĕ, Николай Ильич.

Икасов

Паян çеç килтĕм. Ыранах
Фронта ăсанмалла, Руфина.

Вознесенский

Телейĕр, Николай Ильич,
Сăвапĕ пулĕ вăрçăра.

Руфина

Çын пек чипер калаç-ха, паппă.
Вăрçа кайсан—çынна телей-и?
Епле? Е вилĕ, е аманĕ.

Вознесенский

Чĕппи чăхне вĕрентнĕ евĕр
Кунта ан супăлтет, хĕрĕм.
Вăрçа кайни—этем хисепĕ.

Яковлев

Вĕсен мĕскер? Айван та çамрăк.
Çĕрле йăмралăх айĕнче
Каччи кĕтет хĕрне курасшăн,
Хĕрĕ курасшăн каччине.
Е нимĕр-и, е нимĕç-и?
Вĕсен нихçан çук ним ĕçĕ.
Пĕрне пĕри тĕлпулнă хыççăн
Чăп-чап чуптăвасси çеç пултăр.
Ку яхăнта ăçта çухалтăр,
Варфоломей Фомич?

Вознесенский

Ялан

Рекрутсене ăсатнă чух
Куллен молебен. Ывăнтăм.
Юрланипе сас та юлмарĕ.
Мăнтарăн пырăм ыратать.

Яковлев

Пырне тӳрлетĕпĕр. Пурте
Пуçтарăнăр кĕрекене.
Çаплах килмерĕ Константин.
Çутти те çук чӳречинче.

Икасов

Микки хуралçă патĕнче
Пулас,—унта шав илтĕнетчĕ.

Шутров

Çавна салтак туса чикесчĕ
Чи тарăн сивĕ окопа.
Хĕвел çутти ан курăнтăр.

Яковлев

Эсир чикмесĕрех, ăна
Тĕнче хĕвелĕ çуттинчен
Туберкулез ансат ăсатĕ.
Талантăн ĕмĕрĕ кĕске.

Шутров

Çӳлти аттемĕр—аслă турă
Ун пек хресчен ачисене

Ахаль парать талант тавраш̆е.
Ăна парасч̆е ыттине,—
Усси те пысăк, пархатарлă.

Руфина

Маначч̆е Константин таланч̆е!
Вара мухтавлă поэтесса
Е композитор пулăттăм.
Шопенăн[44] романсне калам-ха.

(Рояль умне ларать, хуллен вылять).

Яковлев

Ч̆елх̆ер усал, Иван Петрович,
Ăвăс вутти пек шăт та шат.
Пуян, укçаллă та хисеплӗ,—
Çитмест, тата эсир ăна
Талант та сӗтесе парасшăн.
Ăçта каять ман пек кӗтӳçӗ?
Укçи те çук. Талант пекки
Ăна йăтса çӳле кăларӗ.
Ĕçре те тăвăлта анчах
Пур талантсен таса çăлкуçӗ.
Укçа çеç шутлакан пуянăн
Яшки хуранӗ çийӗнче
Тăвăл пекки кăштах пăсланӗ.

Вознесенский

Иван Петрович кун пирки
Пӗрре те хирӗç марччӗ ахăр.
Улпут-и, е хресчен-и!—пурпӗр,

Таланчĕ пултăр усăллă.
Чăнах та паллă, Константин
Пултаракан этем, анчах
Унта хура шуйттан таланчĕ.

Шутров

Çапла, Варфоломей Фомич!
Эп те çавна тĕлленĕччĕ.
Вăл, Иванов, ытла йăвашшăн,
Ачаш ача пек пурăнать.
Ăна паян çеç ирĕк парăр,
Укçи те пултăр кĕсъинче,—
Ыран чĕрин чĕрни чăрмалĕ,
Таса чиркӳсенчен вите
Тума та хатĕр ун пегасĕ[47],
„Евангели“ кĕнекине
Тапак туртма чăвашсене
Валеçĕ, пирĕн пупсене
Хăяр пахчи мĕлки тесе
Вăрăм шалçа çине çактарĕ.

Вознесенский

Тĕрĕс каларăр: çаксанах,
Кайран лаша какайĕ çийĕ.

Яковлев

Алли кĕске, аплах çакаймĕ,
Сăмах çукран ытла вĕçтертĕр.

Вознесенский

Ак турă, çактарать.

Икасов

Сире
Малтан хăй аллипе хăй çакĕ.

Вознесенский

Сире те тиркесе хăвармĕ.

Яковлев

Вăрçатăп та ăна, çапах
Сума сăвататăп чĕререн.
Талант çеç мар, хаватлă гений.
Тивлетлĕ амăш çутçанталăк
Мĕншĕн çуратнине пĕлмен,
Ķăвапине кастарнă чух
Ёнерсĕр пысăк йăнăш тунă,
Ăна чăваш чунне парса
Çиççе тăран хакне çухатнă.
Вăл вырăс пулсанах, тĕнчешĕн
Ўсетчĕ тепĕр улăп—Пушкин.

Вознесенский

Ха, тупрăр та. Кунта-мĕн Пушкин...

Яковлев

Кунта... Кунта вăл аслă Пушкин
Ман пек упа шăтăкĕнче.
Культурлă çĕршывра пулсан,
Варфоломей Фомич, сиртен
Кача пўрни те хаклă унăн.

Поэт-и кирлĕ чăваша?
Йăмра çинчи курак-чакакăн
Сасси те килĕшет пире.

Вознесенский

Туман тиха юрттисене
Халех ан хаклăр-ха тархасшăн.

Икасов

Мухтатăр, çавăнпа халех
Ăна кĕнекесем çыртарăр,
Çапса кăларăр тĕнчене--
Пулатăр унăн меценачĕ[48].

Яковлев

Чăваш культури пуласса
Ĕненмесен те, сăмахран,
Ун чĕрине лăплантарма
„Нарспи" пекех çырнисене
Пĕр-икĕ кĕнеке кăларăп.
Ыран ирех: „Чăваш шăрши
Перет. Хурах! Пире хăтарăр!"—
Кăшкăракан Икасов пулĕ,
Тата Варфоломей Фомич.
Хайхи-майхи шкулти ман алăк
Шăлт тăвĕ те питĕрĕнĕ,
Ват пуç çине инкек йăванĕ.

Шутров

Кĕнекине кăларсанах
Сире вăрçни кăна çитет-и,

Çуна хыçне çыхса лартас та
Ярас сип-сивĕ Çĕпĕре.
Чăваш кĕнекесем кăларĕ.
Мунча шуйттанĕ те ийе
Кайран ухват çине ларса
Тип милĕк çулçисем çине
Хăй чĕлхипе çырса пичетлĕ
Ылханлă ирсĕр манифест.

Вознесенский

Ун пек поэзи пуласса
Ĕмĕтленни, ман шухăшпа,
Вавилонра башня лартни вăл[49].
Культура çулĕ çийĕнче
Чăваш чĕлхи—çумкурăк çеç.

Яковлев

Çап-çамрăк чăрсăр Константин
Чăваш поэзи шурăмпуçĕ
Çап-çутă килессе кĕтет-мĕн.
Мана мĕскер?.. Пуп хыççăн пуп
Ĕрчетĕр те чансем кĕрлеччĕр!
Унта ман ĕмĕтпе поэзи!
Ман патăмра çухаличчен
Çуралмалаччĕ Константинăн
Инçе Китай çĕршывĕнче.
Унта сар питлĕ мандарин[50]
Пĕр пĕр укçаллă Ли-ли-Чан
Кĕнекине кăларĕччĕ.
Мана хама та пит кичем.

Роялӗ чăнкăр-чăнкăр çеç.
Аça çапни пек çӗмӗрттер,
Шавла та кӗрлеттер, Руфина!

Вознесенский

Кӗрленине, шавланине
Ачаранах саватăп эпӗ,
Пуçра пӗр шухăш юлмасан,
Мана аван, Иван Петрович.

(Роляь хытă кӗрлет).

Шутров

Ман асаттен шик! шăхăрса
Каркасене алхастарма
Йăли те пурччӗ.

Руфина

Паппă! Паппă!
Выля тархасшăн. Иксӗмӗр
Ташлатпăр, Николай Ильич!

Вознесенский

Епле май клавишне пӗр харăс
Çапма та маннă алăсем.

Икасов

Пире шавне тусан та юрӗ.
Вăрман шавланине илтсе
Вуник куккук пӗр карăш
Авăтнине пӗр харăс

Эсир пĕлетĕр юрă тăрăх.
Руфина, эпĕ,—иккĕн çеç.

Вознесенский

Шавлас тесен, чĕре тĕреклĕ.

(Вылять. Ташлаççĕ).

Шутров

Пам-пам-пав! Тинтăр-тон!
Эх, çамрăк хамăн ĕмĕре
Кунта калла илсе килесчĕ!
Ти-ти! Ти-ро! Ти-ра-рай-ра!

Яковлев

Каллех те çамрăк пулнинче
Ытла тĕнче илемĕ пур-и?

Шутров

Хитре хĕрсем иртнисене
Куратăп та, çанçурăм тăрăх
Юн пĕрхĕнет, чупать чĕтренкĕ.
Тилла-тилле! Тилла-лалла!
Ти-ро-рăм!

Яковлев

Сирĕн çамрăк ĕмĕр
Ытла та аскăн иртнĕ-тĕр.

Шутров

Килте хĕр тарçăсем нумайччĕ.
Тупа тăватăп: алăран

Пĕрне те пушă вĕçертмен.
Хĕрсем çырлаччĕ! Тилтăр-тон!

Яковлев

Хĕрсен куççулĕ хăратман.

(Чӳречерен пăхать).

Килте çутти пур Константинăн.
Йыхрав тума вĕçтер, Икасов!

(Икасов каять).

**Тăваттăмĕш курăну**

Яковлев

Хуллен вылятăр,—кĕрлеттерĕр,
Чĕтрет, Варфоломей Фомич!

Шутров

Чансен янранине кала!
Ун кĕввипе ташлатăп эпĕ.

Вознесенский

Чиркӳ хăвачĕнчен кулни
Киревсĕр ĕç, Иван Петрович.

Шутров

Чиркӳ тавраше сирĕн мар.
Эпир, пуян çынсем, ларттарнă.
Чан сассинче ман ылттăн та
Калаçнине пĕлетĕр-и?
Выля!

Вознесенский

Илемсĕр чăкăлтăш.

Шутров

Выля! Выля! Ху çӳçӳпе
Хăвна пăвса чунна кăларăп.

(Вознесенский вылять).

Шутров

(Тайкаланса сиккелет).

Каç выртан, ир тăран.
Танн-танн!
Алăран, урараи
Туртан.
Тăнкăл-танн! Тăнкăл-танн!
Танн-танн!

Яковлев

Вĕренекен ача-пăча илтсен,
Мĕскер каламĕç, этак так.
Сĕтел умне!

Вознесенский

Каяр, Руфина!

Шутров

Кайтарăп... Ларăр çакăнта.
Çĕр тенкĕ банк.

(Картсем кăларать).

Вознесенский

Пĕр пус та çук.
Пурри килте, Иван Петрович.

Шутров

Эсир чăваш-и?

Вознесенский

Чăн чăваш.

Шутров

Ялан килте укçи чăвашăн.
Кайсан,—унта та яп-яка.
Кивçен паратăп акă—илĕр!
Çĕр тенкĕ банк. Пуçларăмăр.

Вознесенский

Малтанлăха виç тенкĕ çитĕ.

Шутров

Ну, хыткукар. Кассан—юн тухмĕ.

Яковлев

Ан хĕсĕрлĕр, Иван Петрович!
Вун тенкĕ çитĕ, этак так.

(Шутров Руфинăна чĕпĕтет).

Руфина

Ай-яй...

Вознесенский

Эс те пулин ан çухӑр.
Чӗре ахаль те тарӑхать.

Руфина

Ан иртӗнӗр, Иван Петрович!

Шутров

Эх, ӳтӗр лайӑх та, Руфина!

Яковлев

Ури кунтан епле тасалӗ.
Сысна вӗт, этак так. Сысна...

Вознесенский

Кунпа ан витӗр. Козырь мар.

Шутров

Хӗрӗх те пӗр йӑваш чӑвашӑн
Пӗр куç çеç,—тетчӗ асатте.
Чӑваш пулсан та, витӗрех
Курать Варфоломей Ильич.

(Руфинӑна чӗпӗтет).

Руфина

Ай-яй... Киле каяр-и, паппӑ?

Шутров

Ӑçта-ха кайӑн? Паллӑ мар.
Сире тен паппӑр выляса
Ман килелле кӗçӗр ӑсатӗ.

(Икасов кӗрет).

Вознесенский

Вăл килчĕ те тинех чун кĕчĕ.

Икасов

Эсир мухтанă Константин
Пукан ватать те çĕмĕрет.
Темле чăваш хĕрĕ-апайка
Ларатчĕ.

Яковлев

Этакий такой!
Ăна çатма çинче ташлатăп.

Чаршав.

## Пиллĕкмĕш акт

Малтанхи актри пӳлĕм. Ивановпа Анюк кĕреççĕ.

**Пĕрремĕш курăну**

Иванов

Ак манăн пӳлĕм. Лар та кан!
Малтан иртни çинчен кала,
Кайран малаллине пĕлтерĕн.

Анюк

Хула пулсан та, шыраса
Сире тупма питех ансат-мĕн.
Эсир кунта ĕçе кӳртсен,
Савăннипе ухмах ман пуçăм
Ыйтма та маннă ятăра.

Эп килтĕм те, килкартинче
Унта-кунта кăн-кан пăхатăп,
Пĕр ачаран хайхи ыйтатăп.
— Сире вĕрентекен килте-и?
— Вĕсем нумай. Кам кирлĕ?—тет.
— Хура вăл,—тетĕп,—çӳлĕ мар.
— Апла тăк, пуп,—кунтаччĕ,—тет.

Иванов

Нӳхреп пек куçлă та çилхеллĕ,
Сысна пек мăнтăр пулăттăм.

Анюк

Пупах пулсан, ăçта кĕме..
Ура пусмастăм, тупата.
Çап-çамрăкки хури тен çук и?—
Тесен, ача:—Тепре те пур,
Вăл, Константин Васильевич,—тет.
Çăп-çăмăл тупрăм та сире.

Иванов

Кунта пĕр çул пурнатăн ху,
Йыхрав тума та ӳркенетĕн.

Анюк

Ӳркеннипе мар, Константин
Васильевич.

Иванов

Ялти пек тӳрĕ
Вичсемĕр пăт та пат калаç.
Çап-çутă йăлтăркка тӳмесĕр

Ахаль çынсемшĕн манăн ятăм,
Кĕске те уçă: Кĕçтенттин.

Анюк

Пичче теме сире юрамĕ.
Хам евĕр çамрăк.

Иванов

Каччă-çке.

Анюк

Сире манманччĕ, Кĕçтенттин.

Иванов

Мĕнле сире тата? Эп саншăн
Урядник-и?

Анюк

Сана эппин.
Куллен кунах питех курасшăн
Çунаттăм, тав тăвасшăнччĕ.
Çăпатапа та сăхманпа
Килме çитмерĕ-çке хăюлăх.
Тумтир илме укçа пухса
Иртсе те кайрĕ пĕр çулталăк.
Эп сирĕн хӳттĕрте сасартăк
Пĕркенчĕк айĕнчен тарса
Тӳп-тӳрĕ Чĕмпĕр хулине
Килсен, çире шур пир кĕпеччĕ
Тата пуçра пĕр симĕс тутăр.
Пăртак тумлантăм—халĕ килтĕм.

Иванов

Чипер! Чипер! Хула пики!
Сасартăк урамра курсан,
Паллаймăттăм. Ялта пулман-и?

Анюк

Ёнер çеç таврăнтăм килтен.

Иванов

Тивмерĕç-и?

Анюк

Ăçта тивме?
Эп çитнĕ чух, яла кĕтӳ
Çăра тусан йăтса кĕретчĕ.
Пăхатăп та тăван атте
Çаплах мĕскĕн кĕтӳçĕ-мĕн.
Малтан мана вăл палламарĕ.
Киле кĕрсен, аннен куççулĕ
Пит-куçĕ тăрăх шăпăрт çеç
Юхма пуçларĕ, пĕр самант
Пĕрех сăмах та чĕнеймерĕ.

Иванов

Çухалнă ачине курсан,
Нимех те кирлĕ мар аннӳшĕн.

Анюк

Куçне шăлать, куççулĕ витĕр
Пăхать те çĕнĕрен йĕрет.

Хам ёмёрте сана, мăнтарăн,
Кураймăп, вилнĕ пуль—тесе
Йĕрсе шуралчĕ çӳçĕм, тет.
Нимпе хăна тума пĕлмеççĕ.
Кашта çинчен автан тытса
Атте каç пусрĕ те, какайĕ
Вĕрерĕ çурçĕр иртиччен.
Хам Чĕмпĕре килни çинчен,
Курни-илтни пирки каларăм,
Вĕçне тухмарĕ—çитрĕ ир.
Мана эс йăвăр хĕнлĕхрен
Хăтарнине илтсен, анне:
— Вăл çĕр ачи пулман-тăр ахăр,
Çӳлти хăват анса, сана
Сăвап тыттарнă, тет, ачамçăм.

Иванов

Чăнах та, Пихампар вăйне
Мана парсан, вĕсемшĕн эпĕ
Телей тĕнчи антарăттăм.
Патша пек утăччĕ хирте
Тăван аçу—пĕччен кĕтӳçĕ.

Анюк

Вăл—пирĕшти тавраш̆ĕ мар,
Ман пек ахаль çын,—тетĕп эпĕ.
— Хăшпĕр чух турă çĕр çинче
Ыйткалакан пек çĕтĕк-çатăк
Çӳренĕ имĕш,—тет атте.
Нумай калаçнă хыççăн тин

Эс пулнă иккенне ĕненчĕç.
Кĕл тумалли кĕнекене
Ятне çырасчĕ,—тет анне.
Ятна пĕлме тархасласа
Каларĕç.

Иванов

Акă хăямат!
Вĕсем унта тата ман ятшăн
Пупа тӳлесшĕн куланай.
Пĕлтер: сăпса йăви—ман чунăм,—
Шуйттан та пуп та тивеймест.

Анюк

Апла сана шуйттан таврашĕ
Хăтарнă,—тейĕç, шикленсе
Така пусса чӳк те ирттерĕç.

Иванов

Çич пуп тата тăвата дьякон
Юрлаççĕ уншăн,—те эппин.
Пупа та маншăн тӳличчен
Ун укçипе кушак ӳстерччĕр,
Шăши тытни те усăллă.

Анюк

Ял шывĕ пирĕн питĕ тутлă,
Астивеймен эс, Кĕçтенттин!
Унта ишсе çӳренĕ хурăн
Какайĕ лайăх—тутансам:

(Çыххине сĕтел çине хурать).

Кӗрхи кун какайне çисен,
Çемçе тӗккин кăпăш минтерӗ
Çитес çулла хăна пуçне
Кӗтсе куллянӗ,—тет анне.

Иванов

Мăнтăр хура йăтма ансат.
Эп мар, кахал улпут та хатӗр.
Хура хӗн-хур пек йывăр мар
Ӗçре тарланă аллисем
Хăйсем йăтасчӗ хур тукмакӗ.

Анюк

Хурне çисен, алла шăлма
Шур пир те кирлӗ,—тет анне.

(Иванов хулӗ çине алшăлли çакать).

Асту, ăна хамах тӗрленӗ.

Иванов

Кун пек сӗлке пирте параççӗ
Ака-Туй паттăр каччине.
Кун пек парне мана мӗскершӗн?
Ăçта ман паттăрлăх, Анюк?
Çил хытă вӗрсенех, йăванăп.

Анюк

Мана вăрлана çын лаши
Çуллен малта,—ăна лекмерӗ
Сӗлки çапах.

Иванов

Ман шур хут тӑрӑх
Чупать лаша пек кӑранташ.
Ял хыпарне пӗлесшӗн эпӗ,
Ан чарӑн, малалла кала!

Анюк

Ман шӑпӑрҫӑ Курак Карукӗ,
Сана шӑпӑр пилленӗ ҫын,
Эп килнине илтсен, алхапӑл
Килсе те ҫитрӗ тепӗр кун,
Хӑна пулма илсе вӗҫтерчӗ
Аннепелен иксӗмӗре.
Шыва хам сикнӗ вырӑнта
Йӑмралӑх айӗнче ҫӳрерӗм.
Хам каччӑ ҫӗнӗ арӑмне
Пӗрре хӗнenине курсан,
Мана патакӗ айӗнчен
Хӑтарнӑшӗн сана тавтурӑм.
Салам каларӗ шӑпӑрҫӑ.

Иванов

Унти ял пупӗн ывӑлӗ
Мӑшкӑл кӑтартна хӗр-упраҫӑн
Мӗнле-ши пурӑнаҫ хыпарӗ?

Анюк

Ӑна пӑхма та пит хӑрушӑ!
Хӑй ачине хӑех пӑвса
Вӗлернӗ хыҫҫӑн ухмахланнӑ.

„Кураттăр-и, шуракăш эпĕ“,—
Тесе аллисене сулса
Чупсан, вĕçет сап-сарă çӳçĕ.
Епле илемлĕ хĕр чунне
Ӳпне пуп куçĕ пĕтермерĕ?
Хăйсен те çулĕ вăрăм мар.
Шалçи-мĕн тулнă тахçанах.
Эп килеччен пĕр кун малтан
Пупне çĕрле такам этемĕ
Кăнтса кĕпер айне пăрахнă.
Инçех каяймĕ ывăлĕ.
Ман туй пĕтес камичĕ умĕн
Йăмралăх айĕнче укçа
Пĕр ачана паман-и эсĕ?

Иванов

Сентти—ун ячĕ.

Анюк

Çав ача
Пĕр лайăх кĕнеке вуларĕ.
Нарспи çинчен итленĕ чух
Йĕре-йĕре вăй та юлмарĕ.
Ăна çырса кăларнă çын
Кунта, тет, Чĕмпĕр хулинче.
— Ăна пиртен салам çитерĕр,
Кĕнекесем тата çырма
Хушатпăр,—терĕ леш ача.
Çав аслă та ăслă çынна
Пĕрре кăна курасчĕ манăн.

Нарспи ҫинчен каланисем
Чӑнах та тӗрӗс-ши мӗнпурӗ?

Иванов

Хӑвна та Силпири пекех
Пӗркенчӗк айӗнче йертмен-и?
Сан пеккисем чӑвашсенче
Пӗрре те иккӗ мар, Анюк.

Анюк

Мана унчух инке тусан,
Нарспи пек эп те пулӑттӑм,
Наркӑмӑшла хуранӑм манӑн
Вӗретчӗ, е пырне ҫыртса
Тататтӑм каччӑнне, кайран
Тен вилнӗ пулӑттӑм. Анчах
Вилес килмест. Мӗнле ҫеҫ йӑвӑр
Ан пултӑр,—пурӑнӑҫ илемлӗ.
Телей астивеймен этем
Ӑна кӗнекере тупасшӑн.
„Нарспи“ ҫыракана тен эсӗ
Пӗлетӗн пуль, ӑна кала:
Телей ҫинчен ҫырса пӗлтерӗр.

Иванов

Ӑҫтан вӑл тупе-ши ӑна?

Анюк

Хӗн-хур нумай, ахаль те пур.
Хӑй пуҫӗнчен туртса кӑлартӑр,

Анчах телейлĕ кĕнеке
Çынна пит кирлĕ, Кĕçтенттин!

Иванов

Тĕнче пуян. Унта та çук.
Çын пуçĕнче ăçтан вăл пулĕ?

Анюк

Вăл ăслă çын, таçтан та тупĕ.
Ăна пĕрре курасчĕ ман.
Ăçта ун çурчĕ, Кĕçтенттин?

(Икасов кĕрет).

Иккĕмĕш курăну

Иванов

Сăмах çине хайхи Икасов
Хăех çитет.

Икасов

Мĕскер вара?

Иванов

Сана курса хăна тăвасшĕн
Кĕтеççĕ, тет, ялти çынсем.
Майна валли яваççĕ, тет,
Турта пăявĕ.

Икасов

Ĕмĕрех
Сан чĕлхӳнте усал сатира.

Иван Яковлевич йыхравĕ
Кĕтет, тумлан та хăвăрт пыр!

Иванов

Хăй ĕçтĕр, этак так, шавлатăр.
Унта ахаль те пыр нумай.
Пуп пырĕ çеç хапха пек аслă;
Черкке мар, шăнкăравлă тройка
Кĕме пултарĕ хырăмне.

Икасов

Санпа калаçнă вăхăтра
Кунтан чăваш хĕрĕ, чипер хĕр,
Кăштах тухса çÿремĕ-ши?

Анюк

Каям-ха. Тен ыран та килĕп.

(Хăвăрт тухать).

Иванов

Тăхта, Анюк!

(Тухать).

Икасов

Ялти пикешĕн
Вилме хавас, качча та илĕ,
Ансат авланĕ тăр ухмах.
Чăнах, Шутров каларĕшле,
Мĕскер тума-ши çутçанталăк
Ун пек çынна талант пилленĕ?

(Иванов кĕрет).

Иванов

Йӗрӗ те ҫук. Сана, Икасов,
Чӗнменччӗ. Вӑл паян хӑначчӗ.

Икасов

Сӑпайлӑ пул-ха, Константин.
Тусна шелле. Сана тен урӑх
Нихҫан кураймӑп ӗмӗрне.
Ыран ирех фронта каятӑп.

Иванов

Кайни таса. Пӗрремӗш пуля
Тӗлпултӑр ирсӗр кӑкӑрна.
Ҫӳлтен ҫӳле чуну хӑпарӗ.
Ҫут тӗнчене нумай варларӑн.

Икасов

Ларать таси, чӑваш поэчӗ.
Мӑян туталлӑ хӗрсене
Сан евӗр эпӗ чуптуман.

Иванов

Хурах тавраше, чуптуман!..
Ху килӗнти чипер хӗр тарҫӑ
Камран туянчӗ инкекне?
Санран! Кӑлартӑн ухмаха.
Тинех тӑранчӗ-и пуп кусӗ!
Хура юну сан пытанаймӗ
Патша погонӗ айӗнче!

Юхан-шăтанлă аçуна
Вĕлернĕ. Эсĕ те, Икасов,
Ху шăпунтан инçе тараймăн!

Икасов

Суя сăмах. Атте ман сывă.
Ăна никам та вĕлермен.
Хура алли йăваш чăвашăн
Атте çине часах çĕкленмĕ.

Иванов

Йăваш та, çанă тавăрать,
Çĕкленнĕ çав.

Икасов

Мана çыру
Яни эрне те иртеймен.

Иванов

Суймасть, Икасов, ял хыпарĕ.
Ик-виçĕ кун çеç маларах
Çапса кĕпер айне пăрахнă,
Аллисене йытсем кышланă.
Тетте аçу тепре çыраймĕ.

Икасов

Хавас мĕн эсĕ, Константин.
Сана мĕскер этем куççулĕ!

Иванов

Пупсен куççулĕ тăкăнсан,
Тăпра çемçелĕ, çарăк ӳсĕ.

Икасов

Хăçан лăпланĕ çăвару?
Шăммусене кăштах ватам-и?

Иванов

Эп тарçă мар. Мана ватаймăн.
Кунтан тасал-ха, пуп шăрки!

Икасов

Çапас килмест. Ахаль те пĕтĕн.
Хуран пек путнă куçусем.

Иванов

Вилсен те хамăн ирĕк вилĕм.
Çапса кĕпер айне пăрахмĕç.

Икасов

Апла, турти кĕске ухмахăн.

Иванов

Тасал! Ăслишĕн алăк уçă.

Икасов

Хĕрӳ кайнишĕн ан çилен.
Каллех те килĕ, ачашланĕ.
Авланăн та, ачу-пăчу
Хура саксем тулли сиккелĕ.

Иванов

Пĕрре каланă,—çитĕ. Тух!

(Пукан йăтать).

Икасов

Мунча иййи пек араму
Кашта çине кĕпе-йĕм çакĕ.

(Каялла чакать).

Иванов

Йепе кĕпе-йĕм выранне
Кашта çине сире эп çакăп.

Икасов

Хĕвел çинче кĕпӳ шăрки
Чăваш поэчĕ ӳт-тирне
Çисе çӳренипе мухтанĕ.

(Икасов тухса ĕлкĕрет. Пукан алăка çапăнса ванать).

Иванов

Чĕре пĕрмай çиленнипе
Çунать, тата кăвар сапаççĕ.
Кĕлленĕп те çухалăп эпĕ.
Анюк, мăнтарăн хĕр, ыран
Кунта килсен, мана тупаймĕ.

(Алăка çаклатать, пуçне усса вăрахчен тăрать).

Пĕрре тăван яла кайсан,
Çу каçĕ, аслă çимĕк умĕн,
Вăй-кулăра çӳренĕ хыççăн
Çилпе пĕр харăс кашлакан
Йăмралăх айĕнче утаттăм;
Çурхи шур акăш пек чĕре

Таçта çӳлте вӗçсе çӳрес пек
Хаваслӑ ӗмӗтпе тулличчӗ;
Арман тӑвайккинчен хуллен
Хӑпаракан сап-сарӑ уйӑх
Хура вӑрман çинче кулатчӗ;
Вӑта-касса кӗрсен, унта
Пӗр ватӑ ӳсӗр кӳршӗ çын
Пӗр çухрӑм тӑршшӗ мӗлкине
Çуртсем çине йӑвантарса
Урамӑн варринче тӑратчӗ,
Çап-çутӑ ушкӑн çӑлтӑра
Пӑхса хӑй тӗллӗн калаçатчӗ.
Ун хыçӗнче тӑрса, ӑна
Нумай итленӗ хыççӑн эпӗ:
— Мӗншӗн вара ху шухӑшна
Çӑлтӑрсене калатӑн?—терӗм.
Мӑкланнӑ сухалне шӑлса,
Вал, ватӑ çын, çаплаіаларӗ:
— Эс çамрӑк-ха, ӳссен ӑнланӑн.
Этемсемпе калаç,—вӗсем
Йӑпатӗç,—тетӗн-и тӑванӑм!
Вӗсем кулса элек салатӗç,
Кӑларӗç урӑм-сурӑм ят,
Е хирӗçсе тӳпелесен,
Суйланӑ шӑммусем ыратӗç.
Çӳлти сип-сивӗ çӑлтӑрсем
Ман ватӑ сассӑма илтеймӗç,
Анчах та вӗсемпе пӗччен
Калаçнӑ хыççӑн ырӑ канӑç
Тупни пек йӑпанать чӗре.

Ӳссе ҫитсен, мана ӑнланӑн:
Пӗччен тарӑхакан этемӗн
Усал кунҫулӗн шӑпине
Хура элчел тесе ят панӑ.
Хӗвеллӗ кун ху мӗлкӳнтен
Епле тарсан та хӑтӑлаймӑн;
Ҫаплах хура элчел хӑвачӗ
Ҫын виличчен ун патӗнчен
Ниҫта та пӑрӑнмасть, тӑванӑм...
Ача чухне тӑван ялта
Ҫапла каланӑччӗ вӑл ватӑ.

Ӳссе ҫитсен, чӑнах та маншӑн
Хӗн-хурлӑ йывӑр кунсенче
Вӑл пулчӗ манӑн пихампарӑм.
Ту хӗрринчи таса ҫӑлшывӗ
Хӑй сиплӗхне парса, мана
Ӳстернӗччӗ, Силпи вӑрманӗ
Вӗҫӗ-хӗррисӗр кашласа
Ӳхӗрнисем ман сассӑмччӗ.
Кунта ача чухне килсе,
Пурне те вӗсене ҫухатрӑм,
Чие пек хӗрлӗ питӗме
Ҫӗрсе саралнӑ пир пек турӑм,
Хӑва пек тӳрӗ пӗвӗме
Амантрӑм, хуҫӑлчӗ ҫанҫурӑм.
Ылханлӑ вилӗм алӑка
Шакканӑ чух, кунтан каятӑп.
Тен тепӗр хут таса ҫӑлшывӗ
Парнелӗ хӑйӗн сиплӗхне,
Хура вӑрман, Силпи вӑрманӗ,

Çуранлă пĕвĕме тӳрлетĕ,
Ĕ манăн ӳтĕме илсе,
Тăван хирти тăпра кăлканĕ
Çурхи çил айĕнче хумханĕ.

(Япаласем пухма тытăнать. Алăка шаккани илтĕнет).

Яковлев

Унта эс пур-и, Константин?

(Нумай силленĕ хыççăн каять).

Иванов

Тата ан килтĕрччĕ.

(Пăртак тăрсан, каллех килет, кĕмсĕртеттерет).

Яковлев

Уç! уç!
Асту, вататăп.

Иванов

Ваттăр. Алăк
Мана нихçан та кирлĕ мар.
Эп ирĕкре.

(Яковлев хайăрса кĕрет, аллинче туя.
Алăк уçă. Çил вĕрет. Хутсем вĕçеççĕ).

**Виççĕмĕш курăну**

Яковлев

Ы-ых, хурах!

Кунта вататăн, этак так.

(Ванчăк пукана тапса сирпĕтет).

Кăвак сухал çине суртармăп!

Иванов

Хурах ятне çĕршер хутчен
Ман çиййĕме сапма пăрахăр,
Пĕрре те сирĕн умăрта
Ӳсал туса курманччĕ эпĕ.
Элекçĕ офицер Икасов
Каланине илтсе тархасшăн
Ан ярăр хăвăр ятăра,
Кăвак сухалăра сулса
Аллăрăнта туя ан тытăр,
Ман хамăн пĕчĕк чунăм пур,
Тата хама кура пур пуçăм.
Çитет! Мана нумай кышларăр.
Юлашкинчен пĕрре ан тивĕр.

Яковлев

Çăвар ан кар! Хура куракăн
Ялан пĕр юрă кĕвĕ çеç.
Кăранк та кранк. Çаплах та санăн
Ĕмĕтӳнте чăваш поэзи.
Мана ăнлан-ха, çамрăк тусăм.
Патша империнче хырсем
Хăçан йĕпписене пăрахĕç,

Ун чух вара хура чăвашăн
Пулсан та пулĕ тин поэзи.

Иванов

Суя сăмах! Ăçта пытанĕ
Хăватлă халăх ĕмĕчĕ?
Чул татăкки пулсан, ăна
Шыва пăрахăттăн.

Яковлев

Пĕр юрă.
Каллех, çаплах, ялан пĕр юрă.

Иванов

Пĕрре çеç мар, вĕсем нумай.
Пыл хурчĕсем пек пин-пин юрă
Вĕлле пек пысăк чĕрере
Сĕрлет. Чунран шанатăп эпĕ:
Илемлĕ аслă вахăт çитĕ,
Çырмасенче янăракан
Чăваш юрри çӳле çĕкленĕ,—
Ăна тиркемĕç, ăшшăн итлĕç
Мускав та Петербург.

Яковлев

Аванччĕ...
Какай пулсан, пĕçерĕн кукăль,
Чусти валли çеç çăнăх çук.

Иванов

Какайĕ те, чусти те пулĕ,
Анчах пире, иксĕмĕре,

Кĕрекере лекеймĕ кукăль.
Ун чух тăпрамăрсем çинче
Сап-сарă вĕлтĕрен хумханĕ.
Пĕрер хаваслă вăхăт çитĕ.

Яковлев

Сисетĕп, Константин, юмахĕ
Ларать юманăн тăрринче.
Юман шăтман. Силпи вăрманĕ
Тупма пултарĕ-ши икел?

Иванов

Шăтать, Иван Яковлевич!
Сиксе кашлаççĕ вăрмансем.
Каланă вăхăт çитĕ, çитĕ.
Çын хакĕ çута ылттăнран та
Çӳле хăпарĕ ун чухне.

Яковлев

Мана каçарччĕ, Константин!
Ан кай.

Иванов

Вара мĕн тăвăпăр?
Каллех-и „Библи“?

Яковлев

Куçарасчĕ.

Иванов

Ан та тархаслăр, ăннипе
Суратăп „Библийĕр“ çине.

Яковлев

Ытлах сураймăн, этак так.

Иванов

Сире итлетĕп-и? Суратăп!

Яковлев

Тĕрме тĕпне сана пăрахĕç,
Ўтне çеç мар, шăммусене
Хăвармĕ хурт.

Иванов

Ахаль те çĕрĕк.
Кăштах çĕрсе пĕтмен чĕре
Хама та кирлĕ пурăнмалăх,—
Ăна параймăп, шур сухал!

Яковлев

Çукран шеллерĕм çĕлене,
Чĕре патне тытса усрарăм.
Сăнни те пур. Сăхма пăхать.
Ай! Эй! Çук! Çук! Мана тивеймĕн!

Иванов

Апла, шеллерĕн, тавтапуç,
Сăпка çинче мана силлерĕн,

Анчах минтерĕ выранне
Пиçен те сара вĕлтĕренччĕ.
Ак çака „Библи“ умĕнче
Хартса ĕмекенни эс мар-и?
Мухтавла тура кĕнеки
Таса уру патне пырса
Ăна пару пекех çуласшан.
Ме! Ил!

(Çĕклесе çапать).

Яковлев

Эй, чаран, тар ухмах!

Иванов

Ухмах-и эпĕ? Чаннипех
Ухмах. Тĕрĕссине калатан.
Пуçа ăс ларна пулсанах,
Ал лапкăш „Библи“ куçарса
Лармастамччĕ, ӳпкем çĕрместчĕ.
Куçартамар—сана çеç пултар
Çапан пек нӳрлĕ ун мухтавĕ.
Мана пĕр чĕптĕм кирлĕ мар.

(Куçкĕски çине пăхать).

Шупка сан-питĕм. Çын-и эпĕ?
Çын мар, ахаль шăма хутаçĕ.
Кунта эп килтĕм ӳтĕмпе,
Утсан,—урай та аванатчĕ,
Анчах шăммамсемпе каятап.

Савмастăп хамăн пит-куçа.
Хăрушă!..

(Куçкĕскине ывăтать).

Яковлев

Çĕрçăтман пăлхавçă!

Иванов

Мĕн авалтан пăлхавăр юнĕ
Вĕренĕ манăн несĕлте.
Ман аслă асатте, пĕлсе тăр,
Пăлханнă халăхпа пĕрле
Пугачева авал пуç тайнă,
Белебейри чиркӳсене
Ишсе таптанă та вут пенĕ,
Таса иконсене вут хутнă,
Нӳхреп пек куçлă пупсене
Çакса силленĕ, шур сухалăм!
Ытла телейсĕр пултăм эпĕ:
Чиркӳ ватма та пупсене
Çакма шăпам мана тухмарĕ,
Чиркӳ тавраш̆ĕ выранне
Пукан пулсан та ватăп эпĕ.

(Тепĕр пукана ывăтать).

Сыв юл, сывпул, кăвак сухалăм!
Каятăп вилĕм йăвинчен.

(Шĕлепкине тăхăнать, каять).

Яковлев

Мĕскер? Мĕн пулчĕ, этак так?

(Микки кĕрет).

Микки

Кайман-и?

Яковлев

Кайнă. Эсĕ мĕн?

Микки

Эп те ыран каятăп, Якăлч.

Яковлев

Эс те пăлхавçă-и?

Микки

Э... Э...

Пăлхавçă мар-и Кĕçтенттин?

Яковлев

Пăлхавçă вăл.

Микки

Ун майлă эпĕ.

Апла пулсан, эп те пăлхавçă.

**Чаршав.**

1939,

Тĕрлемес ялĕ.

## АВТОР ĂНЛАНТАРНИСЕМ

[1] Чĕмпĕр шкулĕнчи пĕрремĕш класра вĕренекенсен пăлхавне хутшăннăшăн К. В. Иванова 1907-мĕш çулта мартăн 9-мĕшĕнче шкултан хăваласа кăларнă.

[2] И. Я. Яковлев хальхи Тутар республикĕнче Кăнна Кушки ялĕнче 1848-мĕш çулта çуралнă.

[3] Соломон—сĕм авалхи еврейсен патши.

[4] К. В. Иванов Слак-Пуç ялĕнче 1907-мĕш çулта лартнă тополь халĕ те пур.

[5] Турă кĕнекисенчи юмахсем каланă тăрăх, Инсус Христос Иерусалим хулине ашак çине утланса кĕнĕ.

[6] Крылов—вырăссен юптарусем çыракан чаплă поэчĕ. Пĕр юптăрувĕнче куккук хăй авăтнине мухтанăшăн, алла алă çăвать тенĕ пек, автана та мухтать.

[7] Ода—пĕр-пĕр ĕçе е çынна мухтаса çырнă сăвă.

[8] Мамай—13-мĕш ĕмĕрти монгол çарĕсен утаманĕ. Иванов Вознесенский пупа Мамайпа танлаштарса, унăн тискерлĕхне, ирĕк шухăша пăталанине кăтартать.

[9] Бальмонт—вырăс поэчĕ. Хăйĕн сăввисенче сăмахсен янравĕшĕн çес хăвалань.

[10] Сонет—юрату çинчен çырнă 14 йĕркеллĕ сăвă.

[11] Байрон—акăлчансен 19-мĕш ĕмĕрти тĕнчипе мухтава тухнă поэчĕ. Вăл Англи лорчĕсене—улпучĕсене: „Эсир йытă хакне тăмастăр",—тесе, хăйĕн йытти вилсен, унăн тăпри çине памятник лартнă.

[12] Эпитафи—вилнĕ çынна асăнса çырнă сăвă.

[13] Экспромт—хатĕрленмесĕр, сасартăках поэзире, музыкăра, живописре т. ыт. те тунă ĕç.

[14] Л е о н а р д о  д а  В и н ч и—16-мĕш ĕмĕрти Италири чаплă художник, поэт, математик, инженер, архитектор. Унăн ячĕпе нумай ĕçе пултаракан ăста çынна калаççĕ.

[15] К а р и к а т у р а—тăрă шыв çине кăларса, кулса тунă ÿкерчĕк.

[16] А т т е с т а т—вĕренсе тухнине кăтартакан хут.

[17] П а л и т р а—художникĕн сăрсем хумалли хăми.

[18] К. В. Иванов пичетлекен машинкăна йывăçран тума тытăннă. Унăн моделĕ Пушкăрт республикĕнчи Белебей хулинчи чăваш педагогика училищинче сыхланать.

[19] П л ю ш к и н—Гоголĕн „Вилĕ чунсем" произведенинчи çĕтĕк-çурăксем тата кивĕ кантрасем пухакан ютенĕ улпут, хыткукар.

[20] А л ь ф ă  п а  о м е г а. Альфа—грексен алфавитĕнчи малтанхи саспалли, омега—чи юлашки. Пĕрле илсе каласан, шухăшăн пĕтĕмĕшлĕхне, пуçламăшĕпе вĕçне кăтартать.

[21] О р ф е й—авалхи грексен юмахĕсем тăрăх, асамлă поэт-юрăçă.

[22] Д о н-К и х о т—Сервантес писателĕн геройĕ. Нихçан та пулас çук ăпалана тума ĕмĕтленнĕ çынна çав герой ячĕпе чĕнеççĕ.

[23] Г о н ч а р о в к а—ĕлĕкхи Чĕмпĕрти, халь Ульяновскри, аслă урам.

[24] А л л и т е р а ц и—пĕр пек сасăсем пĕр сăвăрах тăтăш янăрани. К. В. Иванов „Нарспи" поэминче вăрманти тăвăл шавне кăтартнă чух аллитераци ăсталăхĕпе усă курнă.

[25] П е й з а ж—çутçанталăка ÿкерни. К. В. Иванов „хупах пейзажĕ" тесе кулса калать.

[26] Э к л о г а—кĕтÿçĕсен пурăнăçне ытла та илемлĕ, телейлĕ кăтартса çырнă произведени.

[27] В и р г и л и й—Рим поэчĕ, „Энеида" поэмăн, тата эклогăсен авторĕ.

[28] Т е т и р—Виргилий эклогин геройĕ, кĕтÿçĕ.

[29] С е н т и м е н т а л л ă—ытла та хĕрхенсе çырни.

[30] С ю ж е т—произведенин тĕп шăнăрĕ, вăл мĕн çинчен каласа пани.

31 Карамзин—вырӑссен сентименталлӑ писателӗ. „Мӑнтарӑн Лиза“ ятлӑ калавӗнче пӗр улпут улталанӑ хӗр кӳлле сиксе вилет.

32 Репин—вырӑссен чаплӑ художникӗ.

33 Лексикон—чӗлхе пуянлӑхӗ, сӑмахсен шучӗ. Ашмарин профессор кӑтартнӑ тӑрӑх, чӑваш чӗлхинче 50 000 яхӑн сӑмах.

34 Суррогат—ҫӳп-ҫап, ӑпӑр-тапӑр.

35 Гренадер—яштак пӳ-силлӗ салтак.

36 Хлестаков—Гоголӗн „Ревизор“ комединчи герой, ултавҫӑ, авантюрист.

37 „Русалка“—Пушкинӑн ҫырса пӗтереймен драми. Ун тӑрӑх Даргомыжский опера ҫырнӑ.

38 Либретто—опера валли ҫырнӑ пьеса.

39 Чӑваш поэчӗ М. Ф. Федоров, „Арҫури“ авторӗ, Чӑваш республикӗнче, Октябрьски районӗнче, Хурапха ялӗнче ҫуралнӑ.

40 Пароди—пӗр-пӗр произведенине урӑхлатса, кулӑшла туса ҫырни.

41 Перпетуум мобиле—ӗмӗр-ӗмӗрех хӑй тӗллӗн ӗҫлекен машина; анчах механика саккунӗ тӑрӑх ӑна тума май ҫук. Кулленхи калаҫура перпетуум-мобиле тесе пулас ҫук ӗҫе тытӑннине калаҫҫӗ.

42 Венера—авалхи грексен илемлӗх турри.

43 Ветеран—пӗр-пӗр вырӑнта нумай ӗҫленӗ ҫын.

44 Сепаратизм—нацилӗх шухӑшне сарни.

45 Витте—иккӗмӗш Николай патшан ҫутӗҫ министрӗ, хаяр реакционер.

46 Шопен—тӗнчипе мухтавлӑ музыкант-композитор.

47 Пегас—поэзи урхамахӗ.

48 Меценат—авалхи Рим ҫынни. Вӑл искусствӑна юратса, талантсене хӳтӗлесе пурӑннӑ. Ҫавӑнпа унӑн ячӗ ӗмӗрсене юлнӑ.

49 „Библи“ кӗнекинчи юмах каланӑ тӑрӑх, авалхи Вавилон ҫӗршывӗнче ҫынсем турӑ патне пӗлӗте ҫитме башня тума тытаннӑ. Пулас ҫук япалана тиркенӗ чух асӑнса калаҫҫӗ.

50 Мандарин—Китай улпучӗ.

Редактор Стихван Шавлы.

НТ2338
Тираж 3.000 экз.
Формат бум 60×92 1/32.
Подписано к печати 1/III 1941 г.
Уч - авт. лист. 2,2.
Объем 4,75 печ. л.
Заказ № 381

Типография № 2 Управления
Издательств и Полиграфии при
СНК ЧАССР. г. Алатырь.

Цена 3 р. 50 к.

ЯКОВ УХСАЙ

ЧЕРНАЯ
СУДЬБА
(трагедия в 5 актах)

На чувашском языке

ГОСИЗДАТ ЧАССР
Чебоксары ★ 1941